К74.268.1Чув
Ц 97
Ч-49204

В. Е. Цыфаркин

# Чӗлхепе литература вӗрентессин хӑш-пӗр ыйтӑвӗсем

ИЗДАТЕЛЬСЕН УШКӐНӖ
«АВАН-И»
ШУПАШКАР — 1993

Национальная библиотека ЧР
4-049204

К74.268.11Чу
Ц91

В. Е. ЦЫФАРКИН.

# *Чӗлхепе литература вӗрентессин хӑш-пӗр ыйтӑвӗсем*

Шупашкар

АВАН-И

1993

ВĂРМАРА йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине халаллатпăр.

ЦЫФАРКИН В. Е.

# ЧĔЛХЕПЕ ЛИТЕРАТУРАНА ВĔРЕНТЕССИН ХĂШ-ПĔР ЫЙТĂВĔСЕМ.

Кĕнеке учительсене вĕрентӳре тата класс тулашĕнчи ĕçсенче пулăшу кӳме юрăхлă сĕнӳ-статьясенчен тăрать. Унта ялти шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентессин хăш-пĕр ыйтăвĕсене хускатнă. Автор хăйĕн опытĕнчен тата чăваш чĕлхипе литератури, халăх историйĕпе культурине вĕрентес задачăсенчен тухса пĕтĕмлетӳсем тăвать.

Чăваш Республикинчи Вăрмар район администрацийĕн халăха вĕрентес ĕç управленийĕн меслетлĕх канашĕ пичетлеме йышăннă.

К-49204
Национальная библиотека Чувашской Республики

**Редакторĕ — Егоров П. А., Вăрмар районĕн халăха вĕрентес ĕç управленийĕн пуçлăхĕ.**

**Рецензенчĕсем — Никифорова З. Т., Козлова Л. В., халăха вĕрентес ĕç управленийĕн меслетçисем.**

Проверено 14 НОЯ 2017

## УМСӐМАХ

Ҫитӗнсе пыракан ӑрӑва таса чунлӑ, ӑшӑ чӗреллӗ, сапӑр кӑмӑллӑ, мал ӗмӗтлӗ, Ҫеҫпӗл пек хӗрӳ те хастар пулма вӗрентесси — чӑваш шкулӗнче ӗҫлекен кашни учителӗн тивӗҫӗ. Чӗлхепе литература вӗрентӗвӗнчен вара ача ӑс-хакӑлӗ, пӗлӳлӗхӗ аталанасси ытларах та килет. Пытарар мар ӗнтӗ, темиҫе ҫул каялла ҫеҫ-ха, чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентес ӗҫре ҫитменлӗхсемпе ҫитӗнӳсем пуррипе ҫукки ҫинчен ытлах калаҫмастӑмӑр. Сӑлтавӗсем паллӑ, вӗсем ҫинчен халӗ ҫыраҫҫӗ, калаҫаҫҫӗ — кунта тепӗр хут асӑнма кирлӗ те мар пулӗ. Хӑй вӑхӑтӗнче шкулта (шкулта ҫеҫ-и) тӑван чӗлхепе литературӑна вӗрентессине сарассине хӗсӗрлесе тӑни ырри патне ҫитермерӗ: чӑваш ҫынни чӑвашлӑхран самаях писрӗ.

«Чӑвашьенри чӗлхесем ҫинчен» саккун йышӑнни чӑваш шкулӗсенче чӑваш чӗлхипе литературине хӑйне тивӗҫлӗ вырӑна — чи малти, чи хисеплӗ вырӑна — ларма та, лартма та майсем уҫса парӗ. 1992 ҫулхи юпа уйӑхӗн 8—9-мӗш кунӗсенче иртнӗ Чӑваш халӑхӗн аслӑ пухӑвӗ (Наци конгресӗ) чӑваш чунлӑ ҫынсене чӑвашлӑхшӑн хастар ӗҫлеме чӗнсе каларӗ.

«Вӗренсе ҫутӑлма телей тупнӑ чӑвашсене калам тата. Астуса тӑрӑр! Пайсӑр тӑрса юлнӑ хӑвӑрӑн мӗскӗн чӑваш тӑван халӑхӑра эсир пулӑшса пурӑнмалла; вӗсене ӑҫтан та пулин катаран пулӑшу килӗ-ха тесе тӑмалла мар. Ан манӑр! Вӗсене вӗрентсе ҫутӑлтарас ӗҫ пуринчен ытла сирӗн ҫинче пулмалла... Эсир хӑвӑр халӑхӑрӑн чӗлхине хирӗҫ тӑмасан, халӑх кӑмӑлне пӗтӗмпех хӑвӑр аллӑрта тытса тӑрӑр», — тесе пилленӗ И. Я. Яковлев вӗренекенӗсене. Аслӑ ҫыннӑмӑрӑн сӑмахӗсем паян та хакне ҫухатман. Ҫак пиле тӗпе хурса чӑваш учителӗсем тӑван чӗлхене, сӑмахлӑха вӗрентессине культурӑна сарассине хавхаланарах та хӗрӳллӗрех пурнӑҫласа пырасса шанас килет.

Хальхи вăхăтра Вăрмар районĕнчи 17 вăтам, 7 тăхăр çул вĕренмелли шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине ятарлă аслă пĕлӳ илнĕ учительсем вĕрентеççĕ. 1992—1993 вĕренӳ çулĕнче вĕрентӳ программине «Чăваш халăх историйĕпе культури» предмета кĕртнĕ хыççăн хăшпĕр шкулсенче икшер вĕрентекен ĕçлеме пуçларĕ, Вăрмарти иккĕмĕш шкулта вĕсем — тăваттăн. Пĕрле алла-аллăн тытăнса вăй хуни ӳсĕмсем тума май парать. Обществăра тăван чĕлхепе литературăна вĕрентессине ытларах тимлĕх уйăрма тытăнни чăваш учителĕ çине те тимлĕрех пăхма хистет. Кĕнеке пособи çителĕклĕ-и, кабинет йĕркеленĕ-и, ăсталăха ӳстерме майсем пур-и тата ытти çавăн пек ыйтусене семинарсенче, меслетлĕх канашĕсенче час-часах тишкереççĕ. Районти шкулсенче чăваш литературине тата чăваш халăх культурине вĕрентекенсене пулăшма район администрацийĕ «Пирĕн ентешсем — ӳнер ĕçченĕсем» ятлă кĕнеке кăларса панăччĕ. Вăл учительсене çеç мар, вĕренекенсене те килĕшни палăрчĕ. «Чĕлхепе литература вĕрентессин хăш-пĕр ыйтăвĕсем» пособи — чăваш учителĕсем кĕтекен тепĕр кĕнеке. Кун пек кăларăмсем малтан та тухкаланăччĕ ĕнтĕ. Анчах та вĕсем, ытларах пĕтĕмĕшле методикăпа çырнăскерсем, «вакрах» ыйтусене сахал хускататчĕç. Ытти предметсемпе çакăн евĕрлĕ кĕнекесем час-часах тухаççĕ, вĕсене издательствăсенче пысăк тиражпа пичетлеççĕ, çĕршывĕпех салатаççĕ. Пирĕн ĕç çав калăпăшах лармасть пулсан та, пысăк ĕçĕн пуçламăшĕ пултăрччĕ, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсене общество умĕнчи хăйсен тивĕçне пурнăçлама кăшт та пулин пулăштăрччĕ.

## АННЕ — ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЧЕ ЧИ ÇЕПĔÇ СĂМАХ

Тăван чĕлхемĕрĕн çӳпçи калама çук тарăн та пуян. Н. И. Ашмарин словарĕнчех 40 пин ытла сăмах: тĕрĕслесе кайсан ытларах-и, тен? Калаçура эпир темиçе пин сăмахпа усă куратпăр. Чĕлхери сăмахсен йышĕ ӳсессипе чакасси тĕрлĕ сăлтавсенчен килет. Çакă паллă: ăçта чĕлхене хисеп тăваççĕ — унта вăл ĕлккенленсех, чечекленсех пырать.

Чăваш чĕлхи — сăмах тĕлĕшĕнчен питĕ пуян чĕлхе. Вăл тĕнчери чи çепĕç чĕлхесен шутне кĕрет. Кун пирки паллă та сумлă ăсчахсем ырă сăмахсем каласа хăварнă. Çакна çеç палăртар: чăваш чĕлхине нумайранпах çине тăрса тĕпчекен венгр ученăйĕ Рона-Таш хăйĕн ĕçне сăвап тесе шутлать. Чăваш чĕлхине тĕпчеме, вĕренме пултарнăшăн чĕререн савăнать. Паллă ученăйăмăр Г. Н. Волков профессор, академик, 1970 çулта Прагăра, Тĕнче конгресĕнче чăвашла тухса каласнă. Тĕрлĕ халăх çыннисем тĕпчевçĕ чăваш чĕлхипех шухăша ăнланмалла, уçăмлă калама пултарнинчен тĕлĕннĕ (калаçăва ытти чĕлхесене куçарса пынă).

Тăван чĕлхемĕрĕн хăвачĕ, пархатарĕ нумай тĕслĕхсенче яр уççăн курăнса тăрать. Шел пулин те, эпир юлашки вăхăтра тăван чĕлхене вĕрентмеллине, ăна чăнах та сума сумаллине педагогикăра çĕнĕ чăнлăх тупнă пек калаçма пуçларăмăр. Çакна центрти тата вырăнти пичетре тухакан статьясем те лайăх кăтартаççĕ. «Эппин, чăнах та ыйтусем çивĕчленсе çитнĕ. Эппин, чăнах та, чунсен хĕлхемĕсем сӳнмен-ха, тăван чĕлхемĕршĕн кулянакансем те пур», — тесе шухăшлатăн хăш чухне.

Халăхăмăра çутта кăларнă Иван Яковлевич Яковлев пуласлăх çыннисене тăван чĕлхене упрама пиллесе хăварнă. Çапла çеç чăваш чĕлхи ыттисенчен кая пулмĕ тенĕ вăл. «Чĕлхе чечекленесси пĕтĕмпех сиртен килет» — акă мĕнле пархатарлă шухăшĕсем учителĕмĕрĕн.

Анчах яланах асра тытатпăр-и-ха пĕтĕм тĕнче педагогики сума сăвакан вĕрентекенĕмĕрĕн сăмахне?!

Асăрханăччĕ ĕнтĕ, тăван чĕлхене вĕрентмелли çинчен педагогикăра çĕнĕ чăнлăх тупнă пек калаçатпăр. Ку вара иртнĕ ĕмĕртех, И. Я. Яковлев пек педагогсене паллă пулнă. Паллă пулнă çеç мар, вĕсем çак шухăша, хăйсен ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртнĕ. И. Я. Яковлевшăн ачасене пăхса çитĕнтерессине тăван чĕлхе урлă йĕркелесе пыни тĕп вырăнта пулнă. Тăван чĕлхе уншăн чи пысăк, ăслă педагог шутланнă.

И. Я. Яковлева тивĕçлипех педагогикăра икĕ чĕлхелĕхĕн теорипе практикин классикĕ тесе хаклаççĕ. Вăл туса хунă система паян-

чченех хăйĕн хакне те, вырăнне те çухатман. Халăх педагогики — акă мĕн пулнă тĕп вырăнта Яковлев системинче. Çав педагогикăна шăнăрласа тăраканĕ вара — тăван чĕлхе.

Тăван чĕлхе шăпи (чăваш чĕлхи çеç мар) халиччене тумхахлă та синкерлĕ пулни вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Революциччен хи вăхăтсем пирки каламăпăр та — халăх хăй чĕлхине пурпĕрех сыхласа хăварма пултарнă — çавă тĕлĕнтерет. Революци хыççăнах ирĕк варкăшĕ чăвашра кăшт сарăлнă, чăваш чĕлхи те ирĕклĕн аталанма тапраннă. (Чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи, чăваш ялавĕ, гербĕ пулни) 30-мĕш çулсенче вара пур чĕлхе те пĕрлешсе пĕр чĕлхе пулать тени вăй илнĕ. Тăван чĕлхешĕн «хуйхăракансене» часах националист тесе каласси те пулнă. Чăвашсен паллă поэчĕ Митта Васлейĕнех аса илер. Е тата 50—60 çулсенче тăван чĕлхе (вак чĕлхе те тенĕ) хăех лайăх аталанĕ, нимĕн те чăрмантармасть тенĕ те алă сулнă. Аталаннă вара! Часах «мĕне кирлĕ чăваш чĕлхи» тесе унта та кунта чăваш шкулĕсене хупса пĕтернĕ. Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай Элкере халалласа çырнă сăвăри йĕркесем аса килеççĕ:

Чăваш çĕр-шывĕнче пурăнатпăр
Чăваш чĕлхишĕн çапăçса.
Кам чĕлхене таптать — çав паттăр...
Епле чăтас çак намăса?
Ыйткалакан пек кĕлленетпĕр:
«Тархасшăн, çăкăр сăмаха
Лавкка çине çырсамăр, — тетпĕр. —
Тăван шкула ан хупăр-ха»...

Тăван чĕлхене вĕренме тата вĕрентме кăсăк та, йывăр та. Çак аса килет. Эпир, чăваш ачисем, литература генийĕсен вырăнĕсемпе çӳретпĕр. Петĕр Хусанкайăн Сиктĕрминчи (Тутарстан) янташĕсем пире тĕл пулмассерен, темĕнччен калаçса тăраççĕ: «Ах, чăвашла пит хитре калаçатăр-çке эсир», — теççĕ вĕсем. Пире сăвă калама, юрă юрлама ыйтаççĕ. Кăмăлĕсене тивĕçтерсен хăпартлансах каяççĕ. «Чунăм лăпланчĕ», — теççĕ вĕсем. Хусанкай янташĕсем чăвашла вĕренмеççĕ иккен. Учителĕ те çук, кĕнекисем те çук. Ачи-пăчи чăвашла та, вырăсла та, тутарла та чип-чиперех калаçать. Çапах та тем çитмест вĕсене, пирĕн çине тĕмсĕлсе пăхаççĕ. Кайран та çырусем çырса йыхравлатчĕç: «Килсе курăр-ха тепре, савăнтарăрха чăваш юррипе те ташшипе».

Е тата Пушкăртстана, К. В. Ивановпа Ухсай Яккăвĕн çĕр-шывне васкатпăр. Автобусрах пулас концерт программине йĕркелетпĕр. репетици ирттеретпĕр. Ульяновск облаçĕнчи чăвашсем, пирĕнпе пĕрле пĕр автобусра пыракансем, эпир калаçнине çăвар карсах ит-

леççĕ. «Чăн чăвашсем епле хитре калаçаççĕ», — теççĕ вĕсем. — Пирĕн ачасене çапла вĕрентесчĕ...» Пĕр мучийĕ тата: «Тăван чĕлхе илемлĕ çав. Ав, сирĕн калаçăвăра итленипех чĕрем савăнса кайрĕ, чунăм çамрăкланчĕ», — тет.

Республика тулашĕнчи чăвашсем патĕнче чылай пулнă эп. Çарта та янташсемпе час-часах тĕл пулма тиветчĕ. Ниçта та тăван чĕлхене хурласа калаçнине илтмен. Шел, чăвашра чăвашсенченех «мĕншĕн пĕлмелле чăваш чĕлхине, мĕншĕн вĕренмелле ăна?» тенине те, текенсемпе те тĕл пулма тӳр килчĕ.

Эппин, мĕн тума кирлĕ-ха вăл, тăван чĕлхе?! Ачасенчен ыйтатăп — çапларах хуравлаççĕ: «Мĕншĕн тесен вăл тăван чĕлхе, çавăнпа вĕренетпĕр», «Тăван чĕлхе ăс парать», «Мĕншĕн тесен вăл атте-анне чĕлхи»...

Пур хуравсем те пĕр пек мар. Хăшĕсем кăнттамрах та хуравлаççĕ: «Эпĕ чăвашла вулама юратмастăп», «Чăвашла вĕренме йывăр», — палăртаççĕ хăшĕсем. Шухăшлаттаракан сăмахсем.

Ачасем аслисен витĕмĕпе ӳсеççĕ. Аслисен шухăшĕ-кăмăлĕ кĕçĕннисене ӳкет. «Улми йывăççинчен аякка ӳкмест» тениех мар-и ку? Чĕлхене хутшăну хатĕрĕ тетпĕр. Эппин, вăл пĕр-пĕринпе калаçма, хутшăнма кирлĕ. Анчах та чĕлхен функцийĕ кунпа çеç вĕçленмест-ха. Чĕлхе вăл халăхăн ăс-хакăлне ăруран ăрăва аталантармалли хатĕр те. Чĕлхе вăл халăхăн ăс-хакăлне, пултарулăхне кăтартакан тĕкĕр те. Шел, анчах çакна темшĕн-çке юлашки вăхăтра манса кайма пуçланăччĕ эпир. Халĕ вара «чавса çывăх та çыртма çук» тенĕ пек килсе тухрĕ. Ăруран ăрăва куçса пыракан ырă та илемлĕ йăла-йĕркесене манса кайрăмăр, ватлăха хисеплеместпĕр, кăмăл-сипетлĕхе (нравственноçа) уямастпăр. Тăван чĕлхене ним выранне хуманни патнех килсе тухни халăх культурин тымарĕсене кăкланиех пулнине тинех ăнланса илтĕмĕр пулать. Çакăн пек тĕслĕх илсе кăтартам: 60—70 çулти ват сынсенех итлеме кăмăллă — чĕлхери сăмахсене тĕлĕ-паллисĕр хуçкаламаççĕ, вĕсемпе илемлĕ усă курма пĕлеççĕ, çӳпĕлемеççĕ чĕлхемĕре. Юрри-сăмаххи те шыв пек юхать вĕсен. Кăшт çамрăкраххисем те юлмаççĕ: калаçăвĕ тирпейлĕ, сăмах-юмах нумай пĕлеççĕ. Юрлама та, ташлама та ăста. Йăла-йĕркесене тыткаласа пыраççĕ, майне пĕлеççĕ. Мĕншĕн тесен ăрусен çыхăнăвĕ таталман, чĕлхе пархатарĕ иксĕлмен. Малалла вара çак çыхăну йăвашлансах пырать. 16—17 çулхи çамрăк тăван чĕлхепе юрлама та, ташлама та пĕлмест. Тăван халăхăн ырă йăли-йĕркисем пирки нимех те калаймасть. Кукамайсемпе асаннесем «çĕр пин юрă юрлама, çĕр пин ташă ташлама» пултарнă пулсан, паянхи çамрăклăх халсăртарах. Ăçта, хăш тапхăрта çухатнă-ши

ăруран ăрăва кучармалли пултарулăх асамне? Ман шутпа, шăпах тăван чĕлхене ним вырăнне хуман тапхăрта.

Çынпа çын хушшинчи ырă çыхăнусем, ырă туйăмсем яланах тăван сăмахпа çыхăннă: тăван кил, тăван анне, тăван çĕр-шыв... Ачасене мĕн пĕчĕкренех тăванлăха хисеплеме вĕрентмелле. Хăй чĕлхине хисеплеме хăнăхнă çын нихçан та тепĕр чĕлхене хурласа калаçмасть. Пĕр чĕлхене тăрăшса вĕренекен тепĕр чĕлхене хăвăрт ăнкаракан пулать. Петĕр Хусанкай йывăр чирлесе выртнă вăхăтра та пăлхар чĕлхине вĕреннĕ. Чăвашларан пăлхарла, пăлхарларан чăвашла тӳрех куçарма тăрăшнă. И. Я. Яковлев та ют çĕр-шыв педагогĕсемпе вĕсен чĕлхипех çыру çӳретнĕ. Мухтавлă ученăй, чăвашран тухнă Н. Я. Бичурин А. С. Пушкинпа, декабристсемпе туслă пулнăскер, нумай чĕлхе пĕлнĕ, китай чĕлхине вĕреннĕ, тĕпченĕ, словарьсем хатĕрленĕ. Пĕтĕм тĕнчипе паллă пулса тăнă. Наукăри ирĕк шухăшсемшĕн мăнастир тĕрмине хупса лартсан та вăл чăвашла сăвă çырнă.

Пĕр чĕлхе—пĕр ăс, ик чĕлхе—ик ăс. Хăшĕсем чăвашла вĕренни вырăсла вĕренме чăрмантарать теççĕ. Чăвашшăн характерлă çемçелĕхрен хăраççĕ вĕсем. Кун пек сăмахсене ансăр тавракурăмлă çын çеç калама пултарать. Эппин, унăн хăйĕн те нумай вĕренмелле-ха. Чĕлхе пĕлни никама та, нихçан та хур туман, чăрмантарман.

Чĕлхемĕрте сăмахсен йышĕ питĕ нумай терĕмĕр. Çав сăмахсемпе хăвăн шухăшна ытарлăн та илемлĕн калама пулать. Чĕлхене пĕлмен çын çеç «ку чĕлхе питĕ чухăн, унпа нимех те калаймăн» тесе кĕлмĕçленме пултарать. Ку каллех хăй вăхăтĕнче тăван чĕлхене хисепе хуманнинчен килчĕ пулмалла. Асăрхăр-ха: çамрăксем хушшинчех хăйсен шухăшне çавăрса калайманнисем чылай. Вĕсен калаçăвне итлесен, хăлха йӳçсех каймалла. Кашни предложенирех хутлă-хутлă сăмахсем чыхса тултараççĕ. Эппин, чĕлхе культури çук.

Чĕлхе тымарлăхĕ питĕ анлă. Вăл халăх пурнăçĕн пур енне те сыпăнтарса тăрать: историне те, культурине те, традицилĕхне те, çĕнĕлĕхне те. Чи кирли — тĕрĕс те йĕркеллĕ, пурнăçа юратакан, гуманизм туйăмĕсемпе аталанакан çынна çитĕнтерме пулăшать. Хăй чĕлхинчен сивĕннĕ этемĕн гуманизм принципĕсенчен сивĕнесси те часах.

Тăван чĕлхен чи çивĕч ыйтăвĕсенчен пĕри — чĕлхе тасалăхне упрасси. Ак, пирĕн республикăри тĕрлĕ вырăнсенче аннене кашни хăйне евĕрлĕ чĕнет. Вирьялсем апи, ани, апай, апу теççĕ. Анат-

рисем аннене аннех тесе калаканччӗ-ха. Ҫапах та чылай ҫӗрте аннене мама тесе чӗнесси модăна кӗчӗ. Ӗлӗкхи вăхăтра дворянсем куштанланса хăйсен амăшӗсене «маман» (француз чӗлхинчи пек) тесе каланă. Вӗсем хыҫҫăн мешенсем «хăваланă». Пирӗн пуплев ҫапла мещенленсе ан кайтăрччӗ. Ҫавăн пекех тете-пичче, аппа сăмахсене те вырăсла ҫавăрттарса «дядя», «тетя» тени килӗшӳллӗ мар. Калаҫура вырăсла-чăвашла перкелешни культурăлăха кăтартмасть, чӗлхене ҫӳпӗленине ҫеҫ палăртать. Хамăрăн кил-ҫурта таса тытма тăрăшатпăр пулсан, чӗлхери сăмахсене те вараламалла мар. Хамăрăн сăмахсемпех темӗн ҫинчен те хитрен, сăнлăхлă калама пулать.

Пулас ăрăвăмăра хамăрăн ҫепӗҫ те хаклă сăмахсенчен сивӗтес марччӗ. Уйăрас мар тăван чӗлхемӗр ăшшинчен ача-пăчамăра. Тăван чӗлхене пӗлни, хисеплени халиччен никама та усал туман. Тăван чӗлхемӗрӗн ăш-пиллӗ сăмахӗсем юхчăр-юхчăр — илемленӗ ҫеҫ пурнăҫăмăр. Халăх ăс-хакăлӗ иксӗлмесӗр пуянланса ҫеҫ пырӗ унăн ҫепӗҫ сăмах ҫӳпҫипе: ан хупăнтăрччӗ ҫеҫ ҫав ҫӳпҫе хупăлчийӗ.

## ВĔРЕННИНЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ

### УРОК — ĂМĂРТУ

Чăваш чĕлхине хальхи ыахăтра мĕнлерех вĕрентесси пирки час-часах хĕрӳ калаçнине илтме тӳр килет. Пĕрисем чĕлхене вĕреннĕ май ытларах пуплеве аталантарасси çине пăхмалла теççĕ. Вĕсен шухăшĕпе, грамматикăна, терминсене, правилăсене мĕнле пĕлни кирлĕ те мар иккен. Теприсем вара чĕлхене грамматика тăрăх вĕрентмелле теççĕ, çапла çеç тăван чĕлхене тарăннăн пĕлме пулать имĕш. Кунта икĕ шухăшĕпе те килĕшме пулать ĕнтĕ, паянхи методика çитĕнĕвĕсем, пĕлтĕрхи чĕлхе реформине кура. Малалла рах, чăнах та, тăван чĕлхене вĕрентекенсем фонетика, морфологи, синтаксис разборĕ тăвасси çине ытларах тимлĕх уйăратчĕç, ачасен правилăсене, тишкерӳ йĕркине пĕр сăмах сиктермесĕр пăхмасăр пĕлмелле тетчĕç. Паллах, çакăн усси те пур пек, анчах ун çине ытларах тимлĕх уйăрни ачасен шухăшлавне, калаçăвне аталантарма чылай чăрмав кӳрет. Вĕрентекенсем уроксем ирттермелли çĕнĕ майсем, мелсем шырама пуçларĕç. Вĕсем грамматикăна вĕреннĕ май çакă ĕç типĕлле ан пултăр теççĕ, ачасен пуплевне те, кăсăкланаслăхне те ӳстересчĕ тесе тимлеççĕ. Çакăн пек уроксенчен пĕри— урок—ăмăрту. Акă, тĕслĕхшĕн, 8-мĕш класра предложени членĕсем çинчен вĕреннине çирĕплетсе тата тĕрĕслесе хăвармалли урок-ăмăрту планĕ.

**Тема:** Предложени членĕсем çинчен вĕреннине аса илни, çирĕплетни.

**Ăнлантарни:** Предложени членĕсем темăна 5, 8, 9 классенче вĕрентеççĕ. Çак темăна ыреннĕ хыççăн аса илсе çирĕплетсе хăварассине питĕ интереслĕ ирттермелле. Урок ачасене хавхалантартăр, шырав ĕçне хăнăхтартăр. Урока ăмăрту евĕрлĕ ирттерни вĕренекенсен хастарлăхне ӳстерет, вĕсем хăйшĕн те, ушкăншăн та тăрăшаççĕ, тăван чĕлхене кăсăклансах тĕпчеççĕ. Çакăн пек урока ытти темăсемпе те йĕркелеме пулать.

**Учитель ĕçĕ:** Предложени членĕсем çинчен уйрăммăн вĕренме пуçличчен ачасене урок—ăмăрту тытăмĕпе паллаштармалла. Темăсене вĕренсе пĕтернĕ хыççăн ăмăрту пуçланассине асăрхаттармалла. Вĕренекенсемшĕн вăл кĕтмен япала ан пултăр. Шкулсенче çакăн пек уроксем малтанах пĕлтермесĕр ирттерсе пăхни ачасем кун пек чухне çухалса кайма пултарассине кăтартрĕ.

Класа эпĕ виçĕ ушкăна пайлатăп, сахал йыш пулсан — икĕ ушкăна. Ушкăнăн пĕлӳ шайне кура ăмăрту шăнăрне тытса пыма ачасене черетлесе кăткăс тата ансат ĕçсем паратăп. Урокра кашни ыренекен хăйшĕн те, командăшăн та тăрăшать. Доска умĕнче ĕç-

ленĕшĕн, тетраде тĕрĕслеттернĕшĕн паллă лартатăп, çав паллах ушкăншăн балл шутланать. Урок миçе пайран тăрассине, кашни пайĕ миçе минут тăсăлассине малтанах палăртатăп. Паллăсене мĕне кура лартассине те малтанах ăнлантаратăп. Ăмăртура пĕр вĕренекен те ĕçлемесĕр лараймасть — унсăрăн ушкăнăн балĕ чакать, вĕренекенĕн те рейтингĕ (миçе хутчен тата мĕнле хуравлани) ÿсмест. Кашни ушкăн миçе балл илнине курăнмалли вырăнта çырса пыратăп (уйрăм пĕчĕк доска пулсан та лайăх).

Урокăн пĕрремĕш пайĕ 10 минута яхăн тăсăлать. Ачасем тĕрĕс мар текста тÿрлетсе çырса илеççĕ. Текстне малтанах доска çине çыратăп. Ăна ачасене кăтартмастăп, чаршавпа хуплатăп. Текста вĕренÿ çулĕнче ачасем çырура тата пуплевре мĕнле йăнăшсем тунине шута илсе хатĕрлетĕп, урока лăпкăн пуçласа яма лайăх кун пек. Тĕслĕхрен: Вăрмар районĕнче—ĕ сасса —е сасăпа (йэ), вырăнти калаçу чĕлхинчи сăмахсене литература чĕлхинчипе арпаштараççĕ, хăш-пĕр грамматика формисене тĕрĕс мар лартаççĕ, кирлĕ мар çĕрте çемçетÿ палли çыраççĕ.

**Текст тĕслĕхĕ:** «Эпĕ йулташсемпе пĕрле Урмара кайрăм. Пирень фотографи ÿкеренмелече. Эпир ÿкерентемерте лавккасем курса çÿрерĕм, тутлă шыв еçрем. Урмарта пире килешекень вырăнсĕм нумай пульчеç. Урмар пирень район центре».

Ачасем çак текста хăйсен тетрачĕ çине тÿрлетсе çырса илеççĕ. Ăмăрту условийĕпе килĕшÿллĕн — чи малтан тÿрлетекенсем алă тăратаççĕ (кашни ушкăнран пĕрер ача). Тетрачĕсене учителе пâраççĕ. Шкул ачи хăй ĕçне «5» паллăлăх çырнă пулсан, ушкăн виçĕ очко çĕнсе илет, ĕçĕнче йăнăш пулсан, очко хушăнмасть, шкул ачи хăйшĕн тата командăшăн тивĕçлĕ паллă тата балл илет. Иккĕмĕшĕ —икĕ очко, виççĕмĕшĕ—пĕр очко. Условийĕсем çавах.

Тетрадьсене тĕрĕслесе балсем лартнă хыççăн чи малтан тĕрĕслесе пĕтернĕ ушкăнран вăтамрах вĕренекен ачана доска çинчи текста тÿрлетме кăларатăп. Йăнăш хăварнипе хăварманнине кура тивĕçлĕ паллă тата балл лартатăп (1—3). Йăнăшсене малалла тÿрлетме ытти ушкăнсенчен начартарах вĕренекенсене кăларатăп. **Асăрхаттарни:** Доска умĕнче тĕрĕсленĕ чухне ачасен каласа лармалла мар. Штраф йĕркипе ушкăнăн балĕ чакма пултарать. Тĕрĕс çырнинех йăнăш тÿрлетсен каллех балл чакать.

Пĕрремĕш ĕçе вĕçлесен доска çинчи текстра мĕнле йăнăшсем пулнине командăсенчи ачасем ăнлантараççĕ. Калакансене паллă, командăна балл лартатăп. Ун хыççăн доска çинчи текста хуратâтăп, анчах пĕр хутсăр предложение хăваратăп.

Урокăн иккĕмĕш пайĕнче (вăл 3—4 минут тăсăлать) предложе-

нири сăмахсене предложени членĕсем енчен тишкеретпĕр. Тĕслĕх: Вăрмарта пире килĕшекен вырăнсем нумай пулчĕç.

Ушкăнсем малтанхи пекех ĕçлеççĕ. Çав вăхăтра командăсем пĕрремĕш ĕçе мĕнле пурнăçланине хăвăрт тĕрĕслесе тухатăп. Текста пĕтĕмпех тĕрĕслесе çырса илнипе илменнине кура ушкăнсене балл лартатăп. Калăпăр, ушкăнра 6 ача, вĕсенчен тăваттăшĕ лайăх ĕçленĕ, çак текста хăйсен тетрачĕсене туллин тĕрĕслесе çырса илнĕ. Иккĕшĕ вара хăйсем мĕнле тӳрлетнипех çырлахнă, йăнăшсем хăварнă. Çапла вара командăн 4 балл çеç пухăнчĕ.

Иккĕмĕш ĕçе пурнăçланине тĕрĕсленĕ чухне те «кам малтан тата тĕрĕс» условие кура тетраде тĕрĕслеттерекене палла лартмалла, ушкăна балл хушса памалла. Панă предложение кашни ушкăнри кашни ачах тишкернине те асăрхамалла.

Юлашкинчен доска умĕнче ĕçлемелле, каласа ăнлантармалла. Асăрханă йăнăшсене командăри ачасем тӳрлетеççĕ. Иккĕмĕш ĕçе пурнăçланă чухне пĕрремĕш ĕçпе доска умĕнче ĕçлеймен ушкăнри ачана хутшăнтаратăп, балсем лартатăп.

Малалла ачасем уйрăм ĕç пурнăçлаççĕ (5 минут).

Малтанах хутсем çине çырнă схемăпа (предложени членĕсен схеми) кашни командăнах тĕслĕхсем туптаратăп. Предложенире пилĕк член пулмалла. Хам кашни ушкăн мĕнле ĕçленине тĕрĕслетĕп, ачасем пурте тăрăшса ĕçленине пăхатăп. Çак ĕçе пурнăçламасăр доска умне ушкăнран никам та тухмасть. Пурнăçларăн — алă тăрататăн. Пурте ĕçлесе пĕтерчĕç — тархасшăн, доска умне.

Балл лартасси малтанхи йĕркепех пулса пырать. Вĕренекен ĕçе пĕтĕмпех тĕрĕс пурнăçласан «5» паллă илет, ун çумне тепĕр тата виçĕ балл ушкăншăн хушăнать, пĕтĕмпе сакăр балл пулать. Тĕрĕс мар-тăк хушăнмасть. Калăпăр, панă схемăран тăваттăшне тĕрĕсех пурнăçланă, пĕри йăнăш — вара ача 4 балл илет (паллă). Иккĕмĕш ушкăнĕ пурне те тĕрĕс пурнăçланă, анчах вăл ĕçе иккĕмĕш вĕçленĕ. Çапла вара вĕренекен «5» паллă илет, ушкăнăн 2 балл çеç хушăнать. Çакна асра тытмалла: доска умĕнчи ĕçе çырса пурнăçланă хыççăн ачан хăй мĕн тунине каласа ăнлантармалла. Йăнăшсене командăри ытти ачасем тӳрлетеççĕ.

Урокăн тăваттăмĕш пайĕнче командăсем пĕр-пĕрне схемăсем параççĕ (1—2, 2—3, 3—1 ушкăнсене). Схемăра 6 предложени членĕнчен ытла пулмалла мар. Ушкăнри ачасем пĕр-пĕринпе канашламасăрах схема тупаççĕ. Чи кăсăклине суйласа илсе учителе кăтартаççĕ, çав схемăпа килĕшӳллĕн хăйсем шухăшланă предложение те тĕрĕслеттереççĕ. Унтан тин эпĕ вĕсене çав схемăна доска çине çырса хума ирĕк паратăп, кашни ушкăна схемине кура тивĕçлĕ

балл хушатăп, ĕçе пурнăçлама мĕн чухлĕ вăхăт уйăрнине калатăп (3 минут). Ушкăнсем çек ĕçе пурте пĕр вăхăтра пурнăçлама пуçлаççĕ. Балл тата паллă лартасси малтанхи йĕркепех пырать. Пурте ĕçлеççĕ — вĕçлеççĕ — тетрадь тĕрĕслени — доска çине çырни — ăнлантарни. Доска çине çырнă предложенире йăнăш пулсан, çав йăнăша тӳрлетме схема паракан ушкăна сĕнетĕп, тĕрĕс пурнăçласан, балл хушатăп.

Урокăн пиллĕкмĕш пайĕнче предложени членĕсем çинчен ăнлантарни.

Кашни ушкăнран пĕрер ача доска умне тухать. Вĕсен предложени тупмалла. Çав предложенипе усă курса хăйсене панă предложени членĕ çинчен ăнлантарса памалла (дополнени, определени, обстоятельство).

Ачасем калама хатĕрленнĕ вăхăтра хам ыттисенчен тĕп членсем, хутсăр предложени çинчен ыйтатăп. Кун пек чух кашни ушкăн мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тухсан та юрать. Командăран хăшĕ-пĕри ĕçлемен е тĕрĕслемен пулсан, ушкăнăн балне чакармалла. Пиллĕкмĕш ĕçе тĕрĕслени, паллă лартни тата балл хушни малтанхи пекех пулса пырать.

Вăхăт юлсан сăмах вăййи ирттерме юрать. Ăна ачасем хăйсемех йĕркелеççĕ. Самантпа усă курса балл шутлама, паллă лартма, çĕнтерӳçĕне палăртма тăрăшатăп. Асăрхаттарни: кашни ĕçе командăран урăх ачана пурнăçлаттармалла. Ыттисем тĕрĕслеме, хушма пултараççĕ. Çавăн тăрăх рейтинг шутламалла, ачасен хастарлăхне палăртмалла, паллă лартмалла.

Урока çакăн пек йĕркепе ирттерни мĕн кăтартать-ха? Вĕренекенсем урок йĕркине хăйсемех кĕрсе каяççĕ. Вĕсене «кам малтан та пултаруллăрах» тени питĕ хавхалантарать. Урок—ăмăрту 5—7 классенче тата та кăсăклăрах иртет, учителĕн çеç ачасене чĕртсе яма пĕлмелле. Ăнлантарнă чухне тăвакан йăнăшсене вĕренекенсем ытти чух асăрхамаççĕ те, кун чухне вара хуравсенчи йăнăшсене тӳрех сисеççĕ, тӳрлетме тăрăшаççĕ. Класри кашни ачах «эпĕ пĕлетĕп-и, пултаратăп-и?» тесе ĕçлет.

## ЯПАЛА ЯЧĔСЕН ТĔНЧИ

### Çулçӳрев-урок

**Тема:** Япала ячĕсем çинчен вĕреннине пĕтĕмлетесси.

**Урок тĕсĕ:** урок-çулçӳрев,

**Кăтарту хатĕрĕсем:** «Япала ячĕсен тĕнчи» çулçӳрев картти, маршрут хучĕсем (карточкăсем), палла пĕлтерекен ӳкерчĕксем — йăл кулă — «лайăх», хурлăхлă сă$_н$ — «начар».

**Малтанхи ĕç:** Учитель япала ячĕсем темăпа мĕн-мĕн вĕреннине кăтартса ӳкерчĕк-картта хатĕрлет. Унта çаврашкапа палăртса япала ячĕ ăнлав, иккĕмĕшле япала ячĕсем, япала ячĕсен хисепĕ, пайăр тата пайăр мар ятсем, япала ячĕсен хисепĕ, япала ячĕсен камăнлăх формисем, япала ячĕсен вĕçленĕвĕ чарăнусем çырать. Ку— çулçӳрев маршручĕ пулать. Ачасен çак маршрутпа çӳресе хăйсен пĕлĕвне кăтартмалла.

Кашни маршрутпах карточкăсем хатĕрлемелле. Вĕсем класа икĕ ушкăна пайласан кашни парттăнах пĕрререн кая мар пулмалла.

Палла кăтартма ача сăнне кăтартака$_н$ икĕ тĕрлĕ ӳкерчĕкк ăсталамалла. Пĕри — кулаканни, «лайăх» паллă, тепри — хурланаканни, «начар» паллă.

Урок юхăмĕ:

Ачасене темăна, урок тĕллевĕсене пĕлтермелле, туска çине «япала ячĕсен тĕнчи» çулçӳрев карттине çакмалла. Урок йĕркипе паллаштармалла.

Сĕтел çине пĕрремĕш маршрут карточкисене хумалла. Кашни парттăран пĕрер ача тухать, карточка илет, вырăна ларса ĕçе пурнăçлама пуçлать. Вĕренекенсен панă сăмахсенчен (япала ячĕсем, глаголсем, паллă ячĕсем, местоименисем т. ыт. те) япала ячĕсене çырса илмелле. Пурнăçласа пĕтернисем туска çине япала ячĕсене çырса хураççĕ. (Кашни парттăран пĕрер ача тухать). Тĕрĕс пулсан «лайăх» паллăн ӳкерчĕкне тивĕçеççĕ, «начар» паллă йăнăш пулсан лекет. Юлашкинчен чарăнура кам мĕнле ĕçленине учитель пĕтĕмлетет.

**Иккĕмĕш чарăну.** Вĕренекенсен иккĕмĕшле япала ячĕсене çырмалла. Ачасем карточка илеççĕ. Унта япала ятĕнчен, паллă ятĕнчен, глаголтан пĕрер иккĕмĕшле япала ячĕсем тумалла. Карточкăна çырса хунă пĕр иккĕмĕшле япала ятне сăмах пулăвĕ енчен тишкермелле.

Туска умĕнче ĕçлесси, тивĕçлĕ паллăсем илесси малтанхи пекех пулса пырать.

**Виççĕмĕш чарăну.** Карточкăра çырса панă пайăр ятсене тĕрĕс уйăрса çырса илмелле. Унта ял, хула, çĕр-шыв, шыв-шур, хаçат.

журнал ячěсене (5 тěслěх), пайăр мар ятсемпе (5 тěслěх) арпаштарса çырса хунă. Вěренекенсем малтанхи пекех ěçлеççě. Учитель пěтěмлетӳ тăвать.

**Тăваттăмěш чарăну.** Япала миçе пулнине мěнле майпа-мелпе палăртнине тишкермелле. Карточка çине, тěслěхрен, **çын** сăмах çыратпăр. Ачасен малалла çапларах ěçлемелле: Виçě (нумай, темиçе) çын, çын-сем, çын-çын. Туска çине ылмашăнса хăйсен ěçне çыраççě, тивěçлě паллă—ӳкерчěк илеççě.

**Пиллěкмěш чарăну.** Япала ячěсен вěçленěвне тишкермелле. Учитель кашни ушкăна пěрер сăмах (тěп падежри япала ячě) çырса парать. Кашни ача пěрин хыççăн тепри çак сăмаха пěр-пěр падежра вěçлет. Ку чарăнура ěçе кам маларах вěçленине те пăхмалла. Пурте тěрěс пулсан кулă—ӳкерчěк, тěрěс мар вěçлесен «начар» паллă памалла.

**Улттăмěш чарăну.** Япала ячěсен камăнлăх формисем мěнле пулнине тишкермелле. Карточкăсем çине икшер япала ячě — хытă тата çемçе сăмахсем çырмалла. Ачасен вěсен çумне сăпат аффикссěсем хушмалла. (1—3 сăпатсем, пěрреллě тата нумайлă хисепсем).

Ачасем каллех ылмашăнса хăйсен ěçне туска çине çыраççě. Икě сăмахне те туллин сăпатланă пулсан икě кулă—паллă илеççě, тулли мар пулсан — пěр паллă-ӳкерчěк. Ку чарăнура та ěç тăсăмěн вăхăтне палăртмалла.

Çулçӳрев маршрутне туллин пурнăçланă ушкăн сăмах вăййи выляма пултарать.

**Учитель пěтěмлетěвě:**

1. Çулçӳрев маршрутне кам (ушкăн) маларах пурнăçласа çитерчě?

2. Кам ěççене тěрěс пурнăçларě?

3. Камăн «лайăх» паллă-ӳкерчěк нумайрах, камăн — «начар» паллă-ӳкерчěк?

Çак урок схемипе кашни пуплев пайне (6—7) вěреннине пěтěмлетме пулать. Урок вăйă-шырав, ăмăрту пайрăмěсемпе пуян. Паллах, кун пек уроксем ачасен вěренес туртăмне ӳстереççě.

## ЭКСПРЕСС ТĔРĔСЛЕВ

«Вĕренекенсен калаçăвĕпе çыравне аталантарасси... тата орфографипе пунктуаци хăнăхăвĕсене çирĕплетесси чăваш чĕлхине вĕрентессин тĕллевĕсем пулса тăраççĕ», — тенĕ чăваш чĕлхин вăтам шкул программинче. Эппин, тăван чĕлхене вĕрентекенĕн пĕрремĕш тивĕçĕ — ачасене тĕрĕс çырма хăнăхтарасси. Çак ĕçе кашни урокрах туса пымалла, çав шутра литература урокĕсенче те. Учительсем çапла ĕçлеççĕ те: вĕсен ĕçне ытларах вĕренекенсем калаçырусене (диктантсене), хайлавсене (сочиненисене), изложенисене мĕнлерех çырнине кура хаклаççĕ. Çавăнпа та ачасене орфографи, пунктуаци правилисене аса илтерсе тăни ырăнлă. Унăн çул йĕрĕ темиçе те пулма пултарать: туска умĕнче каласа çыртарни, правилăсене мĕнле пĕлнине ыйтни тата ыт. те. Эпир, сăмахран, тĕрĕс çырас ăсталăха ÿстерсе пыма çакăн пек май тупрăмăр. Вăл ытти мелсенчен тухăçлăрах пек туйăнать.

**Урок пуçламăшĕнчи ĕç:**

Туска çине ятарласа йăнăш текст (е сăмахсем) çыратпăр. Унти йăнăшсене тÿрлетнĕ чухне ачасем вĕреннĕ правилăсене аса илеççĕ, мĕншĕн çапла çырмаллине ăнлантарса параççĕ. Пĕлменшĕн паллă лартмалла мар, тĕрĕс тÿрлетнĕшĕн рейтинг шутламалла.

Тĕслĕхрен: тÿрлетмелли йăнăшсем:
Е, Ю, Я — сасăллă сăмахсене тĕрĕс çырасси. ЕН—ЙЕН, ЮЛТАШ—ЙУЛТАШ, ЙАКА—ЯКА, КАЙАТЬ—КАЯТЬ тата ыт. те.
Ç, Ч саспаллисем хыççăн И е Ы çырмалли йĕрке. ЧЫЛАЙ—ЧИЛАЙ, ЧЫСЛА—ЧИСЛА, ÇЫРАТЬ—ÇИРАТЬ, ÇЫРУ—ÇИРУ, ÇИЕТ, ÇИРĔМ—ÇЫЕТ, ÇЫРĔМ тата ыт. те.

Çак йĕркепех ытти правилăсене те аса илме пулать. Тĕрĕслетÿ класс шайне пăхса 5—10—15 минута пыма пултарать.

Экспресс тĕрĕслеве 5 класран пуçласа 11 класс таранах йĕркелеме юрать. Уйрăмах аслă ушкăнра час-часах ирттермелле ăна. Мĕншĕн тесен 10—11 классенче программăпа чăваш чĕлхине вĕренмеççĕ, шкул пĕтерсен тăван литературăпа экзаменра хайлав çырма пултараççĕ. Эппин, вĕсене тĕрĕс çыраслăх çинчен асăрхаттарсах тăмалла. Литературăпа темăна вĕренес умĕн экспресс тĕрĕслев (яланах мар пулсан та) ирттерни пĕртте чăрмантармасть.

## САМАХ ВАЙИИ

Кашни вĕрентекенех хăй ирттерекен уроксем тухăçлă пулччăр тесе тăрăшать. Хĕрĕх пилĕк минутра ачасем тем тума та ĕлкĕреççĕ: çĕнĕ тема та вĕренеççĕ, иртнине те аса илеççĕ, хăнăхтарусем те пурнăçлаççĕ. Лайăх ĕçлекен учительсем урокри тема е ĕçсем йывăррипе çăмăллине кура вĕренекенсене кăшт кантарса илни вырăнлă тесе шутлаççĕ. Çак кану саманчĕ усăллăрах пултăр тесен ăна мĕнлерех ирттермелле-ха?

«Вĕренекен ачан словарĕ мĕн чухлĕ пуян, унăн пуплевĕ (калаçăвĕпе çырăвĕ) çавăн чухлĕ сăнарлă та витĕмлĕ, пуян та ĕнентерӳллĕ. Ун пек ачана тăван чĕлхепе литературăна вĕренме те çăмăл, ытти предметсемпе те çăмăллăнах ĕлкĕрсе пырать», — палăртать Л. П. Сергеев профессор. (Л. П. Сергеев. Чăваш чĕлхи методикин ыйтăвĕсем. Ш., 1989, 83 стр.). Çавăнпа та вĕренекенсен лексикине пуянлатассине вĕрентĕвĕн тĕп тĕллевĕ тесе шутламалла. Эппин, кану самантĕнче те çак тĕллеве пурнăçласа пыма çук-ши?

Акă, тĕслĕхшĕн, сăмах вăййисем. Вĕсене урок варринче те, вĕçĕнче те ирттерме юрать.

Пĕрремĕш вăйă: 6х5 сантиметрлă пысăк тăваткăла пĕр пек пĕчĕк тăваткăлсене пайламалла. Пурĕ 30 тăваткăл пулать. Варринчи йĕркесене сăмах çыратпăр. Калăпăр, **вăрман.** Класс ушкăнсене пайланать (2-3). Е малалла, е хыçалалла, е варринчен, е хĕрринчен кĕтеслетсе вуласан сăмах пултăр тесе пĕр саспалли хушмалла. Сăмахсене ушкăнсем черетпе çуршар минут хушши шыраççĕ, тупсан тăваткăла саспаллине çыраççĕ, туска çине — сăмаха. Тĕслĕхрен, Р саспалли айне А çыратпăр. Малалла вуласан арман пулать, пĕтĕмпе пилĕк саспалли. Е М айне Ă çыратпăр та ăман пулать, тăватă саспалли. Пĕрремĕш ушкăнрисем вăрăмрах сăмах тупрĕç, вĕсем çĕнтерӳçĕсем. Çапла пур тăваткăлсене те тултармалла, кайран балл шутламалла. Тăваткăла пĕчĕкрех те пысăкрах та тума пулать. Кашни ушкăн валли пĕрер тăваткăл парсан та юрать.

Иккĕмĕш вăйă: Класс ушкăнсене пайланать (2-3), Пĕрремĕш ушкăнĕ ăсра сăмах шухăшлать те пĕр саспаллине калать. Иккĕмĕш ушкăнĕ ăсра çав саспалли пур сăмаха палăртать те иккĕмĕш саспаллие ккалать. Ĕçĕн тупсăмĕ çакăнта: саспалли калаканĕ са-

А-48204
Национальная библиотека Чувашской Республики

мах вĕçĕ ăна мар, теприне лектĕр тесе тăрăшать. Саспаллие умне те, хыçне те лартма юрать. Сăмахран, Т саспаллие каланă, тепĕр ушкăн мала А сыртарать, виççĕмĕшĕ, калăпăр, Т хыççăн А çырмалла тет, атă япала ячĕ пулчĕ. Çапла, виççĕмĕшсене 1 очко çакланчĕ, анчах та ку вĕсем çĕнтернине пĕлтермест, камăн очко сахалрах, вăл çĕнтерӳçĕ пулать. Сăмах шухăшламасăр саспаллие каланишĕн (çав саспаллие хушсан нимле сăмах та пулма пултараймасть пулсан) очко хушăнать. Вăйăра ытларах япала ячĕсемпе ĕçлени лайăхрах.

Çак сăмах вăййисем ачасен лексика пуянлăхне ӳстереççĕ. Вĕсене ирттерме вăхăт нумаях кирлĕ мар — 3-5 минут хушшинчех ĕлкĕрме пулать. Çак вăйăсен пĕтĕмĕшле тытăмне ăнланса илсен учитель вĕсене хăйне кирлĕ пек улшăнусем кĕртсе тата та интереслĕрех, тухăçлăрах тума пултарать.

## ЧӐВАШ ЧӖЛХИПЕ ЛИТЕРАТУРА КАБИНЕЧӖ

Тӑван чӗлхепе литература предмечӗ умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫлассинче вӗренӳ кабинечӗ пысӑк пулӑшу парать.

Хальхи вӑхӑтра шкулсенче вӗренӗве кабинетсенче йӗркелеҫҫӗ. Ку, паллах, учителӗн ӗҫне, вӗрентӳпе воспитание тӗрӗс те ӑнӑҫлӑ тума нумай пулӑшать. Уроксене кабинетра йӗркелесен вӗсем интереслӗрех те усӑллӑрах иртеҫҫӗ. Паллах, кун пек уроксене вӗренекенсем те килӗштереҫҫӗ. Вӗсен кӑсӑкланас туйӑм, пултаруллӑхӗ ӳсет. Кабинет пулсан учителӗн ӗҫӗ те чылай ҫӑмӑлланать. Кунта вӑл пултарулӑх лабораторине туса хума пултарать. Ӑна ӗҫре пулӑшма тӗрлӗрен дидактика материалӗсем, кӑтартупа техника хатӗрӗсем, кӗнекесем пулӗҫ ку пӳлӗмре. «...вӗренӳпе методика комплексӗнче (вырӑсла учебно-методический комплекс) ку е вӑл предмета вӗренме тата вӗрентме ачасене, ҫавӑн пекех учительсене кирлӗ учебниксем, вулав кӗнекисемпе пособисем тата ытти тӗрлӗ хатӗрсем (методика кӑтартӑвӗсем, вӗренӳ фильмӗсем, таблицӑсен пуххисем, альбомсем, фонохрестоматисем, словарьсем т. ыт. те) кӗмелле. Ҫавнашкалах кашни класс валли тивӗҫлӗ методика комплексӗ пулмалла. Хальхи условисенче ҫак комплекссен мӗнпур элеменчӗсем предмет кабинечӗсенче упранмалла, унсӑрӑн кабинетлӑ вӗренӳ системи тени пуш сӑмах ҫеҫ пулса юлать», — тет М. И. Скворцов профессор. (М. И. Скворцов. Словарьсен вӗренӳпе методика комплексӗнчи вырӑнӗ. Чӑваш чӗлхипе литература вӗрентессин хӑшпӗр ыйтӑвӗсем. III кӗнеке. 80 с.).

Чӑваш чӗлхипе литература предмечӗсем ытти предметсемпе танлаштарсан чылай уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Пӗрремӗшӗ: ку предметсене чӑвашсем пурӑнакан вырӑнсенче ҫеҫ вӗрентеҫҫӗ. Ӑна вӗрентес методикӑпа сахал е шутлӑ ҫынсем ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ. Ҫакна пула дидактика материалӗсем, кӑтарту хатӗрӗсем ҫитмеҫҫӗ. Пуррисем те чылайӑшӗ кивелсе ҫитнӗ, вӑхӑт ыйтӑвне тивӗҫтереймеҫҫӗ. Ҫӗннисене пӳрне хуҫлатса шутласа кӑларма пулать. Тӗрӗс ӗнтӗ, ку енӗпе юлашки вӑхӑтра чылай улшӑну пулчӗ. Чӑваш чӗлхипе литература методикипе ӗҫлекенсем те пӗтӗмӗшле меслетлӗх теорийӗ картинчен тухса кашни класрах вӗрентмелли ӗҫпе интереслене пуҫларӗҫ. Уйрӑм ыйтусемпе ҫырнӑ статьясем ҫеҫ мар, кӗнекесем те тухкаларӗҫ, тӗрлӗ дидактика материалӗсем хатӗрлерӗҫ. (Сӑмахран, В. П. Никитин. VIII—IX классенче чӑваш литератури вӗрентесси. Ш., 1991; Л. П. Сергеев. Чӑваш чӗлхи методики ыйтӑвӗсем. Ш., 1989; Н. Г. Иванова. Ҫеҫпӗл Мишши пултарулӑхне вӗрентесси. Ш., 1992; тӗрлӗ словарьсем, магнитофильмсем, диапозитивсем т. ыт. те). Ҫавах, вырӑс е ют чӗлхесене вӗрентес енӗпе кӑларакан япаласенчен чӑвашӑн шу-

чĕпе те, пахалăхĕпе те чылай юлса пырать. Сăлтавĕ, пирĕн шутпа, чи малтанах çак ĕçрен чăваш чĕлхипе литературин специалисчĕсем пăрăнни е вĕсене çак ĕçе явăçтарманни. Асăрхăр-ха, вырăс чĕлхипе литератури методикипе кăларакан кĕнекесене пĕр автор мар, авторсен ушкăнĕ хатĕрлет. Пирĕн вара — пĕр авторсемех.

Пирĕн республикăри шкулсенче чăваш чĕлхипе литература кабинечĕсене çĕнĕлле йĕркелесси вăй илсе пырать. Энтузиаст-учительсем тăрăшнипе Красноармейски, Муркаш, Вăрмар районĕсенче тĕслĕхлĕ пӳлĕмсем пур. Çавăн пекех университетра чăваш чĕлхипе литература кабинечĕсене лайăх йĕркеленĕ.

Ку статьяра автор хăйĕн ĕç опычĕпе паллаштарас тĕллев тытнă. Кабинета каярах асăннă пек тунин уссине темиçе çул хушши ĕçлесе тĕрĕслесе пăхнă.

Кабинет йĕркелесси виçĕ тапхăра пайланать. **Пĕрремĕшĕ:** хатĕрленӳ тапхăрĕ. Ку вăхăтра учителĕн пулас кабинет валли материалсем хатĕрлемелле. Вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ: литературăпа тата чĕлхе ыйтăвĕсемпе кăларнă постановленисем, документсем, тĕрлĕрен словарьсем, илемлĕ литература, писательсен портречĕсем, хаçат-журналсенче пичетленнĕ статьясем, сăнӳкерчĕксем, иллюстрацисем т. ыт. те.

Çак тапхăртах техника хатĕрĕсем енĕпе те ыйтăва татса памалла. Чăваш чĕлхипе литература учителĕн яланах электрофон, магнитофон пулмалла. Çаплах эпидиаскоппа (эпископ) кодоскоп пулсан та лайăх. Анчах та вĕсем шкулсенче кашни кабинет валлиех çитмеççĕ.

Кабинетри пулăшу хатĕрĕсем чылай çĕрте хатĕррисемех пур (сĕтел-пукан, кĕнеке çӳлĕкĕсем, витринăсем, шкапсем). Хăшпĕрисене шкул мастерскойĕнчех ăсталама пулать.

**Иккĕмĕшĕ:** кабинетри япаласене вырнаçтарса тухасси тата илемлетесси. Ку тапхăрта учителĕн чи кăткăс та вăрăма тăсăлакан ĕçсене пурнăçлама тивет. Малтанах ĕç планне туса хатĕрлемелле. Стеллажсене, витринăсене, кĕнеке çӳлĕкĕсене вырнаçтарса тухмалла. Вĕсене пĕлсе вырнаçтарни вĕрентекене малашне ĕçре пулăшу парĕ. Ман шутпа, кашни урокрах кирлĕ пулакан япаласене хума класăн малти енче туска-стенка туни лайăхрах. Вĕсене патшалăх кăлармасть, шкул мастерскойĕнчех аслă классенче вĕренекенсем хăйсемех тума пултараççĕ.

Акă эпир хамăр вăйпах çакăн пек туска-стенка ăсталанă. Вăл ик еннелле шуса уçăлакан тускаран, тĕрлĕ шкапсенчен тăрать. Вĕсене ăсталанă чухне чăваш чĕлхипе тата литературипе кăларнă

таблицăсене, писательсем çинчен каласа паракан плакатсен, грампластинка виçисене шута илмелле. Вĕсем валли те ятарласа шкап тумалла. Çапла вара, учителе урокра кирлĕ пулакан япаласем яланах алă айĕнче пулаççĕ.

Чăваш чĕлхипе таблицăсем, писательсем çинчен кăларнă плакатсем те пур, грампластинкăсем, магнитофильмсем, слайдсем чылай, вĕсемпе ăнăçлă усă курас тесен вĕсене системăласа йĕркелесе хуни кирлĕ. Акă, эпир пĕр шкулта чăваш чĕлхипе литература пӳлĕмĕпе паллашнăччĕ. Темĕн те пур учителĕн: темиçе тĕрлĕ альбом, папкăсем, кĕнекесем, хаçат-журнал. Анчах вĕсене пĕрне те йĕркелесе тухман. Кашни класпа кăларнă темиçе тĕрлĕ пластинкăсем пĕр курупкара упранаççĕ. Вĕсен номерĕсем те, ячĕсене çырса хуни те çук. Хăш урокра, хăш темăпа мĕн итлеттермелле — паллă мар. Çавăнпа урокра кирлĕ пулакан кашни япаланах йĕркеллĕ упрама та, çăмăллăнах шыраса тупма та майсем тумалла.

Пулăшу хатĕрĕсене вырнаçтармасăр стендсене йĕркелес ĕçе пуçăнма çук. Çак ĕç хăй темиçе пайран тăрать:

1. Кабинет планне тумалла.

2. Çав план тăрăх стендсен эскизне хатĕрлемелле. Эскизра стенд калăпăшне, унăн ятне, мĕнле материалсем пулассине палăртмалла.

Çавна манмалла мар: стендсене калăпăш енчен икĕ тĕрлĕ тумалла. Çакăн пек çеç вĕсем куçа илĕртмелле пулаççĕ, пӳлĕм илемне пăсмаççĕ. Акă, эпир 5,8 х 8 м виçеллĕ класра стендсен калăпăшне çапла палăртрăмăр: 1х0,8 м., 1х1,60 м. Планшетсен хулăнăшĕ—10 сантиметра яхăн. Çакăн пек рельефлă туни вĕсене стенаран кăшт тухса тăма май парать. Эстетика тĕлĕшĕнчен те хитререх пулать. Стендсене ăсталама чус хăма, ДВП е çӳхе фанера, тĕрлĕ тĕслĕ гуашьсем, шыв эмульсиллĕ сăрă кирлĕ пулаççĕ. (Асăрхаттарни: стендсен çийне шыв эмульсиллĕ сăрăпа икĕ хутчен — грунтласа тата якатса сăрламалла. Паралонран çĕленĕ валикпа усă курни меллĕрех). Ку ĕçсем — хура ĕçсем. Вĕсене ĕç урокĕнче хатĕрлесе çитерме пулать.

Стендсене çапла ят патăмăр: «Чăваш халăхне çутта кăларакан — И. Я. Яковлев». Уроксенче Иван Яковлевич çинчен час-часах калаçма тивет. Тĕрĕссипе кашни урокрах калаçмалла та пирĕн И. Я. Яковлев çинчен. Уйрăм стенд пулни вара çак ĕçе пурнăçлама чылай çăмăллатать. Ку стенда йĕркелеме кашни учителĕнех материал çителĕклĕ.

Малалла çакăн пек стендсем каяççĕ: «Чăваш литературин аталанăвĕ», «Чăваш халăх поэчĕсемпе писателĕсем», «1941—1945 çулсенчи литература», «Литературăлла Тăваньен» тата «Халăх сăмах-

ләхӗ». Пирӗн шутпа, ку стендсене йӗркелеме йывӑрах та мар, материалсене кирлӗ чухлӗ пухмалла ҫеҫ.

«Литературӑллӑ Тӑваньен» стенд тӑван районтан тухнӑ ҫыравҫӑсем ҫинчен каласа парать. Ӑна эпир карта еверлӗ, писательсем ҫуралнӑ ялсене кӑтартса ӑсталанӑ. Унсӑр пуҫне альбом та тумалла. Унта писатель-ентешсем ҫинчен тӗрлӗ материалсем пухса пымалла.

Акӑ, чӗлхе ыйтӑвӗсемпе ҫакӑн пек стендсем хатӗрленӗ: «Чӑваш чӗлхине тӗпчесе ҫырнӑ ӗҫсем», «Диалект картти» (районсене тата районсен центрӗсене кӑтартмалла), «Вӗренекенӗн мӗн пӗлмелле», «Тӑван чӗлхе ҫинчен каланӑ ытарлӑ сӑмахсем». Ку стендсем вӗрентекене кашни урокрах тенӗ пек кирлӗ пулаҫҫӗ. Калӑпӑр «Вӗренекенӗн мӗн пӗлмелле» стендра сочиненире миҫе сӑмах ҫырма пултармаллине, чӗлхе наукин пайӗсене вӗреннӗ май мӗн-мӗн пӗлмеллине, вулав хӑвӑртлӑхӗ мӗнле пулмаллине яланах курса тӑмалла пултӑр. Ку вӗренекене йӗркелентерет, хӑй пултарулӑхне тӗрӗслесе пӑхма хӑнӑхтарать.

Стендсене илемлетнӗ чухне учителӗн чылай тӑрӑшмалла. Хӑшпӗрисем художник пултарулӑхӗ ҫукки ҫине йӑвантарма пултараҫҫӗ. Кунта пултарни ҫитмесен те ҫак ӗҫе чиперех тума пулать. Вӗрентекенӗн трафаретпа, шаблонпа ӗҫлеме ҫеҫ хӑнӑхмалла. Тӑрӑшсассӑн плакат перипе те ҫырма хӑнӑхатӑн. (Кун пирки «Халӑх шкулӗн» иккӗмӗш кӑларӑмӗнче лайӑх ҫырса кӑтартнӑ. Авторӗ — А. С. Абрамов, статйи — «Илем кӳрет тӗрӗ-эрӗш»).

Учитель кабинет тӑвас ӗҫе вӗренекенсене те явӑҫтарать. Вӗсем стендсене ӑсталама, кайран сӑрлама, материалсене вырнаҫтарса хума пултараҫҫӗ. Вӗсене пӗлсе ертсе пыма ҫеҫ пултармалла.

Стендсем класӑн икӗ енӗпе шӑнӑҫаҫҫӗ. Вӗсене час-часах улӑштарма та кирлӗ мар. Тирпейлӗ упрасан вӗсемпе темиҫе ҫул ӑнӑҫлӑ усӑ курма пулать. Ҫаплах кабинетра «Ӑҫта вӗренме каймалла» экспозици йӗркелени те вырӑнлӑ. Кунта университетри чӑваш филологийӗпе культури факультечӗ ҫинчен каласа памалла.

Кабинетра вӑхӑт-вӑхӑтпа улшӑнса тӑракан стендсем те пулмалла. Вӗсене малта — тускапа юнашар вырнаҫтарсан лайӑхрах. Акӑ «Паян урокра» текен кӗтесре ҫӗнӗ темӑна уҫса паракан экспозици хатӗрлемелле. Вӗренекенсем тӑвакан йӑнӑшсене кӑтартни те кирлӗ. Пӳлӗмӗн эпиграфӗ пирки те манмалла мар. Малти тата хыҫалти планра туска ҫийӗнче, стендсем ҫийӗнче И. Я. Яковлев каланисем, «Чӑвашьенри чӗлхесем ҫинчен» саккунран илнӗ йӗркесем пулсан аванрах. Тӗслӗхрен, И. Я. Яковлев ҫапла каланӑ: «Халӑхӑн ӑс-тӑнӗпе унӑн пӗтӗм тӗнчекурӑмне тӑван чӗлхе чун парать. Тӑван чӗлхесӗр чӑн-чӑн пӗлӳ ҫук».

Сулахайри стена ҫинче, стендсем тӑрринче писательсен портре-

чĕсене вырнаçтарса тухсан лайăх пулмалла. Шупашкарти 6-мĕш шкулта çыравçăсен сăнĕсене пĕчĕк рамăсем çине хитрен çыпăçтарса тухнă, тĕрĕсемпе капăрлатнă. Портретсем пурте пĕр ретре пулнипе пӳлĕмĕн композицийĕ татах та илемленет. Эпир хамăр та çапла тунă, ытти учительсене те çаплах тума сĕннĕ пулăттăмăр.

Виççĕмĕш тапхăр: Кабинетри материала системăллăн йĕркелени тата пуянлатса пырасси. Учителĕн ĕç опычĕ ӳснĕ май çак материалсене пухасси çăмăлланать. Асăннăччĕ ĕнтĕ, тăван районта çуралса ӳснĕ писательсем çинчен альбом йĕркелемелле. Çав альбома тума шырав ĕçне ирттермесĕр май çук. Эппин, кабинетра литература краеведенийĕн ĕçне пуçармалла.

Кĕскен палăртсан, чăваш чĕлхипе литература кабинетĕнчи материала пуянлатмалли майсем тем чухлех. Тăрăшсан, ӳркенмесен, уроксене тухăçлă ирттерме май паракан япаласем тума та, тупма та пулать.

Кабинет йĕркелени çеç мар, унпа усă курма пĕлни те кирлĕ. Ку пĕтĕмпех учителĕн тăрăшулăхĕпе пултарулăхĕнчен килет. Çакă паллă: кабинет вĕренекенсене тарăн пĕлӳ пама, темăсене пурнăçпа тачă çыхăнтарса вĕрентме пулăшать. Кабинет ĕçне ачасене явăçтарни вĕсене тăван чĕлхепе литературăна юратса вĕренме хавхалантарать.

Кабинет тăвасси çăмăл ĕç мар. Ăна пĕр çултах йĕркелесе те çитереймĕн. Çапах та çак ĕçĕн ыррине вĕрентекен часах туйса илет. Кунта пултаруллă ĕçлеме питех те лайăх, меллĕ.

## VIII КЛАСРА ТĂВАН ЛИТЕРАТУРĂНА ВĔРЕНТЕКЕНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

1990 çулта чăваш кĕнеке издательстви 8-мĕш класра чăваш литературине вĕренме çĕнĕ учебник-хрестомати пичетлерĕ. Аслăрах çулти учительсем асăрхарĕç пулĕ: ку кăларăм ĕлĕкхи учебник-хрестоматипе пĕр евĕрлĕ мар. Вĕрентӳ никĕсне истори хронологийĕн принципне хунă кунта. Произведенисене хăш вăхăтра çырнине тата мĕнле пурнăçа кăтартнине шута илсе литература аталанăвĕн тапхăрĕсем тăрăх вырнаçтарса тухнă. Калăпăр, Çеçпĕл Мишши хайĕн сăввисене 1917—1922 çулсенче çырнă. Вăхăчĕ — революци çулĕсем. Сăввисем те çав вăхăтри пурнăçа ăнланса илме пулăшаççĕ. Е тата Илпек Микулайĕн «Госпитальте» калавне илĕпĕр. Писатель хăй те 1941—1945 çулсенче хаяр вăрçăра пулнă, совет салтакĕсен паттăрлăхне хăй куçĕпе курнă. (Çыравçă хăй те вăрçăри паттăрлăхшăн темиçе орденпа медаль илме тивĕç пулнă). Писатель «Госпитальте» калава 1942 çулта çырнă. Апла пулсассăн çак хайлав вăрçă вăхăтĕнчи чăваш литературин сăн-сăпатне кăтартма тивĕçлĕ.

Тăван сăмахлăха вĕрентекенĕн ачасене литература пĕлĕвĕ панисĕр пуçне тăван халăх историйĕ, культури çинчен вĕрентессине тимлĕх уйăрма тивет. Чăваш шкулĕсенче те халĕ çавăн пек предмета программăна кĕртнĕ. Илемлĕ литературăна вĕрентесси вăл пĕр ĕç, халăх историне вĕрентесси урăх ĕç тейĕç хăшĕсем. Çак икĕ пархатарлă ĕçе пĕр-пĕринчен уйăрмасăр пурнăçламалла пулĕ. Ку— чăваш сăмахлăхне вĕрентекенĕн таса та сăваплă ĕçĕ. Ан тив, шкул ачи чăваш сăмахлăхĕн аталанăвне ăнланса унăн пурлăх-пуянлăхĕпе паллашса пынă майăн чăваш халăх кунçулĕн тапхăрĕсем çинчен хайлавсем урлă та, вĕрентекен сăмахĕ тăрăх та ăша хывса пытăр. Кăна пурнăçлама çак кĕнеке пулăшасса шанатпăр.

VIII класра литература тапхăрĕсемпе, çыравçă пултарулăхĕпе паллаштарма уйрăм уроксем ирттерме палăртман. Апла пулин те кĕнекере вĕсем çинчен çав ӳсĕмри ачасене ăнланмалла материалсем панă. Çакă произведенисене автор пултарулăхĕпе тачă çыхăнтарса вĕрентме май парĕ, хайлавсене лайăхрах ăнланма пулăшĕ. Ачасем ун пек материалсемпе ытларах хăйсем тĕллĕн паллашаççĕ.

Вăталăх (VIII—IX) классенчи вĕренӳ кĕнекисем пĕр тытăмлă. IX класс кĕнеки пирвайхи хут 1986 çулта тухнăччĕ. Вĕрентӳре усă курнă хыççăн вăл ачасене те, учительсене те килĕшни палăрчĕ. Çак учебник-хрестоматие Халăха вĕрентес ĕç министерстви çирĕплетрĕ, вăл шкул программине кĕрсе кайрĕ. Вĕрентекене пулăшма «VIII тата IX классенче чăваш литератури вĕрентесси. 1991 ç. (ав-

торӗ В. П. Никитин) методика кӑтартӑвӗ те тухрӗ. Ҫав кӗнекере VIII класс учебник-хрестоматипе ӗҫлеме юрӑхлӑ канашсем чылаях. Учителӗн, паллах, унпа та тӑтӑшах усӑ курмалла.

Эпир учителе VIII класра чӑваш литературине вӗрентессипе ҫыхӑннӑ хӑшпӗр канашсем сӗнетпӗр. Вӗсем ытти учительсемшӗн ӗҫре танлаштарса пӑхма усӑллӑ пулассӑн туйӑнать. Паллах, вӗрентекен вӗсене ҫирӗп пӑхӑнса ӗҫлеме мар, хӑйне юрӑхлине кура ҫеҫ усӑ курма, мӗн кирлине илме, хушма, ҫӗнетме, туллилетме пултарать.

## VIII КЛАСРА ЛИТЕРАТУРА УРОКӖСЕНЕ ИРТТЕРМЕ СӖННӖ ЙӖРКЕ

Пурӗ — 68 сехет.
Произведенисене вӗренме — 56 сехет.
Ҫыру ӗҫӗсем иртерме — 8 сехет.
Килти вулава йӗркелеме — 4 сехет.

1. Кӳртӗм калаҫу. Класпа паллашни. Вӗренӳ хатӗрӗсене йӗркелени. Ҫӗнӗ кӗнекепе паллаштарни. Сӑнарлӑ сӑмах ӑсталӑхӗ. Ҫыру ӗҫне хатӗрленни.

2. Ҫыру ӗҫӗ: «Эпӗ тӑван литературӑна юратса вулатӑп-и?» (Ҫуллахи вӑхӑтра мӗн вуланӑ, мӗнле ҫӗнӗ кӗнекесемпе паллашнӑ?)

3. Чӑваш халӑхӗн авалхи сӑмахлӑхӗ. Тишкерӳллӗ вулав.

4. Чӑваш туйӗ. Пирӗн патӑрти туй йӑли-йӗркисем. Туй юррисем. Мӑн кӗрӳ такмакӗ. Аруран ӑрӑва куҫакан пултарулӑх. Вулав, калаҫу.

5. Пӗр-пӗрин ӑсталӑхӗпе паллашни. Сӑвӑ калани. Илемлӗ вулав.

6. Туй юррисем. Вӗсен илемӗ. Тишкерме хӑнӑхни.

7. Анатри чӑвашсен, турисен, анат енчисен туйӗсем. Унти шкул ачисемпе паллашма ҫыру ҫӳретме хавхалантарни. Юрӑсен тӗслӗхӗсене тишкересси.

8. Музейри урок. Туй халӑхӗн тум-тирӗ, ҫи-пуҫӗ. Туя инсценировкӑласа кӑтартни.

9. Килти хайлава ҫырса илни. Темӑсем:

«Ҫӗр пин сӑмах, ҫӗр пин юрӑ, ҫӗр пин тӗрӗ».
«Эпӗ паянхи туя ҫапларах куратӑп».

10. Хайлавсене тишкерни. Хаклани.

11. Кивӗ ҫырулӑх вӑхӑтӗнчи литература аталанӑвӗ. Лекци. (Ачасене конспект ҫырма вӗрентесси).

12. С. Михайлов. Юнка. Анатри чăвашпа вирьял чăвашĕ хушшинчи калаçу. Çыравçă анекдочĕсем. Вĕсене тишкерни.

13. Ачасен анекдочĕсем. Вĕсене тишкерни.

14. Çĕнĕ çырулăх пуçламăшĕнчи литература утăмĕсем. М. Федоров пултарулăхĕ.

15. «Арçури» поэма. Тишкерӳллĕ вулав.

16. Сăвă калани.

И. Я. Яковлев çырăвĕсем. Шухăшлавлă вулав.

17. И. Я. Яковлев чăваш халăхĕшĕн тунă ĕçĕсем. (Экскурси-калаçу.

18. Чăваш халăхне. (Халал).

19. Тихăн Петĕркки. Кушкă ачи. (Вуланине тĕрĕслени, аса илни).

20. Класри хайлав: —«Чăваш халăхĕшĕн çуннă ыра çынсем».

«Чуралăхри чĕлхене шанчăк пама...»

21. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литератури. М. Акимов пултарулăхĕ. «Шӳт туни», «Тĕлĕнмелле».

22. Тайăр Тимкки пултарулăхĕ. Илемлĕ вулав. Сăвăсене тишкерни.

23. Сăвă калани. Илемлĕ вулав. Сăвăсене тишкерни.

24. Сăвă калани. «Пурнăç çути» сăвă. Верлибр ăнлав.

25. Сăвă каланине магнитофон ленти çине çырни. Тишкерни. Кĕнекери ыйтусемпе ĕçлени.

26. Октябрьти революципе граждан вăрçи вăхăтĕнчи литература. «Икĕ виле». (Калаçу, вулав).

27. Г. В. Зайцев — Тал-Мăрса пултарулăхĕ.

28. Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе пултарулăхĕ. Конференци. Сăвă калани.

29. Сăвăсене тишкерме хăнăхни. «Çĕн кун аки» сăвă.

30. «Тинĕсе» сăвă шухăшĕ. Хавхи. Сăвă калани.

31. Класри хайлав. (133 с.)

33. 1920—1930 çулсенчи литература. В. Рсай пултарулăхĕ.

34. «Ваçлей саккунĕ» калава тишкерни. Илемлĕ вулав. Калав шухăшĕ.

35. Иван Мучи калавĕсем. Илемлĕ вулав. Тишкерӳ.

36. «Мĕскĕн Упаҥкка». Илемлĕ вулав. Калав шухăшне палăртни.

37. «Капкăн» журналти произведенисем. Питлев жанрĕ. Ачасен кулăшĕ.

38. Килти вулав: кулăшла хайлавсем.

39. Тăван çĕршыв Аслă вăрçи вăхăтĕнчи тата вăрçă хыççăнхи чăваш литератури. В. Бараев пултарулăхĕ.

40. В. Бараев сăввисене тишкерни. Сăвă калани.

41. Сăвă калани. Сăвă виçисене палăртни.

42. Илпек Микулайӗ. «Госпитальте» калава тишкерни. Калав жанрӗ.

43. Илемлӗ вулав. Калаври сӑнар. Калав тытӑмӗ.

44. В. С. Алентей пултарулӑхӗ. «Хырсем ӗмӗрех ем-ешӗл» повеçе тишкерни.

45. Вулав хӑвӑртлӑхӗ. Калаври сӑнарлӑх. Вуланине каласа пама хӑнӑхни.

46. Гриша Антонов паттӑрлӑхне произведенире кӑтартни. Тишкерӗве аталантарни.

47. Килти вулав: вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи паттӑрлӑха мухтакан произведенисем.

48. Класри хайлав-калаçу: — «Пирӗн ентешсем — вӑрçӑ паттӑрӗсем».

—«Эпир çапла ӳсрӗмӗр». (Ваттисем каласа пани тӑрӑх).

49. Класри хайлав.

50. Н. Айзман. «Ӑçта-ши ман атте?» драмӑна вулани. Драма жанрӗ.

51. Илемлӗ вулав.

52. Драмӑра ӗç-хӗле кӑтартни. Сӑнарсем. Илемлӗ вулав.

53. Илемлӗ вулав. Пӗтӗмлетӳ.

54. Хальхи чӑваш литератури. Хаçатсемпе журналсем, çӗнӗ кӗнекесем тӑрӑх иртгернӗ калаçу. (Библиотекӑра).

55. К. Петров произведенийӗсем. «Сенкер çӑлтӑр» романа çырнин историйӗ. Илемлӗ вулав.

56. Илемлӗ вулав.

57. Илемлӗ вулав.

«Юратупа наркӑмӑш» повеçе килте вулани тӑрӑх конференци иртгерни. Этем совеçӗ, ирӗклӗхӗ, çынлӑхӗ. Халӑх пурнӑçӗнче, çӗр-шыв историйӗнче тӗн вырӑнӗ пирки калаçни.

59. Вулав конференцийӗ.

60. Л. Таллеров. «Пысӑк тӗнчери пӗр пӗчӗк чун». Илемлӗ вулав.

61. Килте вуланине тӗрӗслени. Илемлӗ вулав.

62. Килти вулава тӗрӗслени.

63. Хайлав: — «Çутçанталӑк тата эпир»,

—«Л. Таллеров повеçне эпӗ çапла ӑнланатӑп».

64. Çамрӑк ӑру ячӗпе. Сӑвӑсем вулани.

65. Сӑвӑсем вулани. Сӑвӑ калассипе ӑмӑрту йӗркелени.

66. Сӑвӑсене тишкерни. Çӗнӗ журналсене пӑхса тухни.

67—68. Вӗреннине аса илсе çуллахи вӑхӑтра мӗн вуламалли пирки калаçни. Пӗтӗмлетӳ.

## ЛИТЕРАТУРА ТАПХĂРĔСЕМПЕ ÇЫРАВÇĂ ПУЛТАРУЛĂХĔ ÇИНЧЕН УЙРĂМ УРОКРА ВĔРЕНТМЕЛЛЕ-И?

Çыравçă пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен вĕрентме 8-мĕш класра уйрăм урок палăртман. Анчах çакă çыравçă çинчен вуçах калаçмалла маррине пĕлтермест. Кĕнекене çыравçăсем çинчен каласа панине, тĕпчевçĕсен статйисене кĕртнĕ. Вĕсемпе ьĕренекенсем килте паллашаççĕ. Çитес урок валли калаçма хатĕрленсе килеççĕ. Асаилӳ, калаçу е статьян тĕп шухăшне палăртаççĕ. Конспектлаççĕ. Кун пек уроксем ытларах лекци-информаци-калаçу мелĕпе иртеççĕ. Уроксен тĕллевĕ — çав е ку тапхăрти сăмахлăх аталанăвĕпе паллаштарасси, çыравçă пултарулăхĕн тĕп енĕсене (уйрăмлăхĕсене), вăл литературăра мĕнле вырăн йышăннине палăртасси. Паллах, çак тĕллевсене пурнăçласан, ача çыравçă пирки информаци илнипе пĕрлех, çав тапхăр çинчен те пĕлет, историллĕ ăнланулăх та ӳсет, хайлава та кăсăклансах вулать.

Çыравçă пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен калаçассине çак йĕркепе тума пулать.

Класри пĕр-пĕр ачана (кашни çыравçăпа урăх ача) «Чăваш писателĕсем» кĕнекери кирлĕ материала тĕплĕн вуласа тухса класс умĕнче каласа пама хатĕрлентермелле. Ку ачасен пуплев ăсталăхне те, астуса юласлăхне те аталантарать. Çыравçă хăçан, ăçта çуралса ӳснине, мĕнле пĕлӳ илнине, хайлавсен ячĕсене хăма-туска çине каласа çыртарсан лайăх. Кунта, паллах, карттăпа ĕçлени вырăнлă, çыравçăн библиотекăра пур кĕнекисемпе паллаштарни те кирлĕ.

Тĕслĕх: Вĕрентекен туска умне малтан палăртнă ачана кăларса çак сăмахсене çыртарать:

«Тайăр Тимкки 1889 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче хальхи Тутар республикине кĕрекен Пăва районĕнчи Пимĕрсел-Шемек ялĕнче çуралса ӳснĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, революциллĕ шухăшсем сарнăшăн шкултан кăларса, ярсан, Хусанта типографире ĕçленĕ. «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ. 1916 çулта вăрçăра вилнĕ».

Çырнине тĕрĕсленĕ хыççăн Тайăр Тимкки çинчен биографиллĕ информаци итлемелле. Паллах, пĕрремĕш информацие учитель хăй иртерет. Çавна майăнах çак ĕçе мĕнле хатĕрленмеллине паллаштарать. «Чăваш писателĕсем» кĕнеке библиотекăра пĕрре-иккĕрен ытла пулмасан та пултарать. Тен, тепĕр вырăнта вăл çук-тăр. Учителĕн ьара ку кĕнеке яланах ал айĕнче пулмалла.

Ытти уроксенче çыравçă пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен калаçма кашнинчех уйрăм ачана хушмалла. Малтанах вĕсем хут çине çырнине вуласа параççĕ пулсан, малалла хут çине пăхмасăрах калаçма хăнăхмалла. Ан тив, ачан яках тухаймасен та, хăй сăма-

хĕсемпе калăс тенине каламă хăнăхтăр. Ку — шухăша аталантарать çеç.

Биографилле — информаци тĕслĕхĕ:

«Чăваш литературинче Тайăр Тимкки ячĕ М. Федоров, К. Иванов, Н. Шупуççынни, Ф. Павлов ячĕсемпе юнашар тăрать. Вăл та вĕсем пекех Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Кунта литературăпа интересленме пуçланă, сăвăсем çырнă, вырăсларан куçарнă.

Тайăр Тимкки мĕн ачаран тăлăххăн ӳснĕ. Хăйсен ялĕнчи пуçламăш шкулта пĕлӳ илнĕ хыççăн çивĕч те йăрă ачана, тăрăшулăхне кура, Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме илнĕ. 1905 çулта революцилле демонстрацисене хутшăннăшăн ăна шкултан кăларса янă. Унтан вăл Хусанта типографире ĕçленĕ. Чăвашсен пирвайхи хаçатĕнче «Хыпарта» сăвăсем пичетлет. Революцие йыхăрнăшăн ăна темиçе хутчен те арестлеççĕ, тĕрмене хупаççĕ. Сăвăç чăваш ялĕсенче революциллĕ агитаци туса çӳренĕ. Тăван çĕр-шывĕнче кружоксем те йĕркеленĕ.

Тайăр Тимккин паллăрах произведенийĕсем çаксем: «Çăлăнăç», «Чаплă вилĕм юрри», «Шухăш», «Паян», «Çĕнĕ çул», «Татăк çăкăр тупасшăн», «Атьăр, тăвансем», «Çĕпĕртен ярса панă сăвă», «Рабочисен юрри», «Каçхи сасă» сăвăсем, «Çутта тухасчĕ», «Пурнăç çути» прозăллă сăвăсем. Вăл «Интернационал», «Варшавянка», «Хресченсене ирĕке кăларчĕç» юрăсене чăвашла куçарнă. Хальхи вăхăтра Шемекри шкулта Тайăр Тимккине халалласа кĕтес уçнă. Кашни çулах шкул ачисем поэзи уявĕ ирттереççĕ».

Малалла учитель Тайăр Тимккине халалланă хайлавсемпе паллаштарать. Вĕренекенсенчен килте вулама хушнă «Ырă усала çĕнтерет...» статьяна мĕнле ăнланнине ыйтмалла. Учебник-хрестоматире ку енĕпе ыйтусем çителĕклех панă.

Çыравçă çинчен калаçнă чухне вăл пурăннă вăхăт унăн пултарулăхне мĕнле витĕм кӳнине кăтартса хăвармалла. Çакă писатель хайлавĕсене лайăхрах ăнланма пулăшĕ.

Çапла вара, литература тапхăрĕсемпе писатель пултарулăхĕ çинчен программăра уйрăм ирок ирттерме хушман пулин те, учитель темăсене урок çаврăмĕпе (блокпа) вĕрентнĕ май асăннă ыйтусем çинче чарăнса тăратех. Ачасем литература аталанăвне тапхăрсем çине пайланипе пĕрремĕш хут тĕл пулаççĕ. Эппин, çакă малтанах асра юлтăр тесе тăрăшмалла.

Учителе çакăн пек кăтарту хатĕрĕсемпе усă курма сĕнме пулать: П. Сизов ӳкернĕ Тайăр Тимккин портречĕ, «Чăвашсем ăçта-ăçта пурăнаççĕ-» карттă-стенд, К. Петровăн «Тайăр» роман-хроники, «Чăваш писателĕсем» справочник (М. Юрьев хатĕрленĕ, 1968).

## ПРОИЗВЕДЕНИ ЧĔЛХИНЕ ТИШКЕРНИ

**Тема:** В. С. Алентейĕн «Хырсем ĕмĕрех ем-ешĕл» повеçĕнчи çутçанталăк ÿкерчĕкĕсем.

**Тишкерÿ сулăмĕ:** Хайлаври сăнарлăха ăнланса илесси.

**Ăнлантарни:** В. С. Алентей «Хырсем ĕмĕрех ем-ешĕл» повеçре Тăван çĕршыв аслă вăрçин пĕрремĕш кунĕсем çинчен çырса кăтартать. Писатель хăй те, вăрçăченех çарта пулнăскер, чикĕ хуралланăскер, вутлă çапăçăва чи малтан кĕнĕ. Паллах, пирĕн салтаксем тăшманпа çапăçса паттăрлăх кăтартнине сахал мар курнă вăл. Хаяр тытăçусенче çухатусем пысăк пулнă. В. С. Алентейĕн те фронтри тус-юлташĕсенчен нумайăшĕ пуç хунă, тăван ялĕнчен — Кĕтеснертен — вăрçа тухса кайнă тантăшĕсенчен чылайăшĕ вутлă хиртех выртса юлнă. Вĕсене асра тытса çырнă та писатель «Хырсем ĕмĕрех ем-ешĕл» повеçе.

Произведение вĕренме программа пилĕк сехет уйăрнă. Повеçе класра сасăпа вуласа тухма виçĕ сехет çителĕклĕ. (Паллах, класс шайне пăхса сехетсен шутне чакарма е хушма пулать). Вуланă хушăрах тишкерĕве те иртермелле. Кĕнекере ыйтусене панă.

Маларах уроксене иртерме сĕннĕ йĕркере В. С. Алентей пултарулăхне вĕрентме тăватă сехет палăртнă. Унсăр пуçне çак блокрах хайлав çырасси те, хушма вулава тĕрĕслесси те пур. Тепĕр виçĕ сехет хушăнать. Темăна миçе сехет вĕрентесси программăпа палăртнă пекех пулса пыраймасть. Ку шкул условийĕнчен те, класс шайĕнчен те килет. Паллах, учительсем çакна шута илеççех ĕнтĕ.

**Учитель ĕçĕ:** произведение вуласа тухсан пĕтĕмĕшле тишкерÿ иртгерни вырăнлă. Тишкерÿ йĕркипе малтанах паллаштаратăп. Акă вăл:

1. Мĕншĕн повеçе «Хырсем ĕмĕрех ем-ешĕл» тесе ят панă?
2. Произведенире мĕнле ĕçсем пулса иртеççĕ? (Сюжечĕ).
3. Хайлаври сăнарсем çинчен калăр.
4. Повеçĕн шухăшĕ.
5. Повеçри сăнарлăх.

Юлашки ыйту саккăрмĕшсемшĕн йывăртарах пек туйăнать пулин те ĕçе малтанах йĕркелесе пырсан вĕренекенсем çыхăнуллă калаçма пултараççех. Çакна та палăртмалла: пиллĕкмĕш ыйту малтанхисемпе тачă çыхăнса тăрать, вĕсене пĕрлештерет, ăнланма пулăшать.

Повеçе вуланă чухне çакă курăнчĕ: класра пĕр сас-чĕвĕ те çук, кашни вĕренекен тимлĕ йĕрлет, пурте хайлавăн кашни сăмахне, кашни йĕркене, кашни шухăша ăша хывса пырать, чĕрипе ăнла-

нать. Мĕн илĕртет-ха ачасене?! Паллах, интереслĕ сюжет; паллах, повеçри тĕп сăнарăн Гриша Антоновăн шухăш-кăмăлĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, паттăрлăхĕ. Вĕсенчен те ытларах хайлавăн чĕлхи, сăнарлăхĕ. Кăна ачасем хăйсем те ăнланаççĕ. Çак ăнланулăха кăтартма, каласа пама пултараслăха аталантарасси — учителĕн тивĕçĕ.

Писатель «Хырсем ĕмĕрех ем-ешĕл» повеçри героя çутçанталăкпа çыхăнтарса кăтартать. Чуна пырса тивекен вырăнсем нумай унта. Çутçанталăк ӳкерчĕкĕсем хайлава илемлĕ тăваççĕ. Вĕсем кашни страницăрах, кашни абзацрах тенĕ пек тĕл пулаççĕ. Автор çутçанталăка сăнлассине тĕп тĕллеве хумасть. Тĕп вырăнта—Гриша Антоновăн, Тăван çĕршывшăн вăрçă вăрçакан салтакăн, шухăш-кăмăлĕ. Вăл пурнăçа юратни, пурнăçшăн вилĕме хирĕç кайни. Çутçанталăкăн чĕрĕ ӳкерчĕкĕсем çакна лайăх ăнланма пулăшаççĕ.

Ачасене повесть сăнарлăхне туйса илме вĕрентес тĕллевпе хайлава вулас умĕнех çакăн пек ĕç тума сĕнетĕп: повеçри хăвна килĕшекен çутçанталăк ӳкерчĕкне çырса ил те ăнлантарма пĕл. Вăл герой кăмăлне уçса пама пулăшать-и?

Шкул ачи çапла майпа çыннăн ĕç-хĕлне, шухăш-кăмăлне çутçанталăк ӳкерчĕкĕпе танлаштарса тишкерме вĕренет.

Вĕренекенсем повеçри çутçанталăк ӳкерчĕкĕсене çăмăллăнах тупаççĕ. Анчах вĕсене произведени шухăшĕпе, герой кăмăлĕпе çыхăнтарасси чылайăшĕшĕн йывăртарах. Халĕ класа пултару шайне кура ушкăнласа вĕрентме тытăннă май учитель çак ĕçе пурнăçлассине тĕрлĕ йĕркелет.

Акă повеçри çутçанталăк ӳкерчĕкĕсемпе вĕсене ăнлантарса панин тĕслĕхĕсем:

«... Уншăн тĕнчере пурте, пурте вĕр-çĕнĕ, пурте çап-çутă, пурте илемлĕ. Аваă, тӳпере ушкăн-ушкăн шурă пĕлĕтсем иртеççĕ. Ăçта çитиччен каяççĕ-ши вĕсем? Мĕнле кăна çĕршыва çитсе курмаççĕ-ши? Тем анлăш тӳпере тӳлеккĕн ярăнаççĕ пĕлĕтсем». (192 стр).

Ӳссе çитĕнекен ачан, Кĕркурин, ĕмĕчĕпе шухăшне кăтартакан сăмахсем. Вулатăн та — кĕтӳ ачи çамрăк пăрусем кĕтсе çӳренĕ саманта куратăн. Ак, вăл йĕри-тавра тинкерет те çутçанталăка сăнать. Пурте илемлĕ, илĕртӳллĕ ачашăн — хĕвелĕ те, пĕлĕчĕ те, шевли те. «... Унăн та таçти-таçти çĕршывсене çитсе курас килет, пурне те пĕлес килет». (192 стр.).

Йĕри-тавралăх, çутçанталăк, пурнăç Кĕркуришĕн çеç мар, кашни пĕчĕк чĕрчуншăн та хаклă.

«Шăрчăксем çине пăхсан, унăн чун-чĕрине каллех хаваслăх пырса сĕртĕнет. Савăнăçлă чĕрчунсем вĕсем. Епле çăмăллăн сикеççĕ. Хĕвел шевлинче вĕсем йăлтăр-йăлтăр курăнса каяççĕ. Вĕсем

ҫӳлелле, хӗвел патнелле сикеҫҫӗ. Вӗсене те ҫутӑ-ҫутӑ тавралӑх, хӗвел илӗртет». (192 стр.).

Ҫак йӗркесем Кӗркури хавхаланчӑклӑ (романтикӑллӑ) ача пулнине кӑтартаҫҫӗ. Вӑл кашни пулӑма хӑйне евӗрлӗ, ӑшшӑн, илемлӗ ӑнланать.

«Акӑ ун умӗнче утмӑлтурат чечекӗ. Хирти чи илемлӗ чечексенчен пӗри. Ыраш хушшинчен кӑн-кӑвак куҫӗпе йӑл кулса пӑхать вӑл». (192 стр.).

Автор ытахальтен ҫак сӑнлӑха илсе кӑтартмасть. Утмӑлтурат чечекне чӗрӗлетсе «ялти чи хитре хӗр пек пӑхать» тет. Вулакан Кӗркури ҫитӗнсе пырса каччӑ шутне кӗнине ӑнланать. Утмӑлтурат чечекӗ вырӑнӗнче — хӗр, хӗрӗ — Марук.

Кӗркури хитрелӗхе ҫутҫанталӑкра курать. Ҫутҫанталӑк уншӑн чӗрӗ япала. Чӗрӗ япала — пурнӑҫ.

«—Чи хитри — пурнӑҫ, ачам. Пурнӑҫ», — ҫапла калать ӑна Тимахви мучи. Акӑ, «... Вӗсен (кӑткӑсен) пӗр канӑҫ та ҫук иккен. Таҫта чупаҫҫӗ вӗсем, таҫта васкаҫҫӗ. Пӗр курӑк ҫулҫи урлӑ каҫаҫҫӗ те тепӗр ҫулҫӑ патне ҫитсе тухаҫҫӗ. Вӗсемшӗн кашни ҫулҫӑ — ҫӳллӗ сӑрт, кашни лакӑм-тӗкӗм — пысӑк ҫырма. Акӑ, кӑткӑсем тем вӑрӑмӑш улӑм пӗрчине сӗтӗрсе пыраҫҫӗ. Мӗн тума кирлӗ вӑл вӗсене? Ӑҫта илсе каяҫҫӗ ӑна вӗсем? Пурнӑҫ... Пур ҫӗрте те пурнӑҫ вӗрет».

Ҫапла, пурнӑҫран илемли ҫук. Ҫавӑнпа Кӗркури пурнӑҫра хӑйӗн ҫине тиеннӗ пур йывӑрлӑха та, хуйха-суйха та чӑтӑмлӑн тӳссе ирттерет. Автор ӑна ҫамрӑк юманпа танлаштарать. Кӗркури шкултан лайӑх вӗренсе тухать, савнӑ хӗрӗпе — Марукпа— пӗрлешет, ӗмӗтне пурнӑҫлать — агронома вӗренет. «Анчах сасартӑк хыпар: вӑрҫӑ!»

«Хӗвел халиччен пекех ҫап-ҫутӑ ҫутатать. Курӑксем те халиччен пекех ем-ешӗл. Хырсем те, чӑрӑшсем те ем-ешӗл. Кӳлӗри шыв та халиччен пекех лӑпкӑн-лӑпкӑн тӗлӗрет. Техникум ҫурчӗсем те хӑйсен вырӑнӗнчех. Тавралӑх, тӗнче мӗнле пулнӑ, ҫавӑн пекех, Гришӑпа Марук ҫӳренӗ улӑх, ҫул тата... Халичченхи пекех ҫеремлӗ, ҫеп-ҫемҫе. Авӑ, ун хӗрринчи чечексем епле хитрен курӑнаҫҫӗ. Ҫак чечеке чӑвашсем «салтак тӳми» теҫҫӗ. Салтак тӳми...» (196 стр.).

Ҫак ӳкерчӗк вӑрҫӑн пирвайхи кунӗсене сӑнарлать. Халлӗхе унӑн шӑв-шавӗ, йывӑрӗ, асапӗ чӑваш ҫӗршывнех ҫитеймен. Анчах, темле лӑпкӑлӑх пурри туйӑнать ҫеҫ, арҫынсем салтак тумӗ тӑхӑнма пуҫланӑ ӗнтӗ. «Пурте фронт валли, тӑшмана ҫӗнтерме!» лозунг кашнин чун-чӗрине вырнаҫнӑ. Кӗркури те салтак тумне тӑхӑнать,

Марук фермăра ĕçлеме тытăнать. Малтан çырса кăтартнă лăпкăлăх сасартăк çухалать.

Акă, Кĕркури вăрçă хирĕнче. Вилĕме хирĕç çапăçава тухнă вăл, пурнăçшăн, хăй телейĕшĕн те, çынсен телейĕшĕн те.

«Фашистсем пĕтĕм тĕнчене хурлăх, хĕн-асап ăшне путарĕç. Пĕтĕм этемлĕхе мăйкăч тăхăнтарĕç. Çук, этемлĕхе пĕтме памалла мар. Этемлĕх, çутă уйăх, ылтăн хĕвел пекех, пин-пин çăлтăр пекех, ĕмĕр-ĕмĕр çуталса тăтăр. Этемлĕхĕн çутă сăнне нихçан та нимĕн те ан тĕксĕмлеттĕр». (203 с.).

Гриша Антонов пирвайхи çапăçура паттăрлăх кăтартать:

«—Пултаратăн, Антонов! Лайăх çапăçрăн, тусăм — илтĕнчĕ взвод командирĕн сасси» (203 с.).

Вăрçă вăл — хăрушлăх, вилĕм. Автор пире кашни ўкерчĕкпе çакна лайăх туйтарать.

«Гриша умĕнче çамрăк пилеш ларатчĕ. Халĕ ăна пуля çĕçĕпе чаш! тутарса сĕрнĕ пекех касса кайрĕ. Ўкрĕ пилеш. Часах çулçисем шанса кайĕç унăн, çăтăр-çапă пулса выртĕ вăл. Ун çинче нихçан та хĕп-хĕрлĕ çырласем вут пек çунса курăнмĕç». (206 с.).

Туять салтак: тăшман пульли те унăн пурнăçне пилеше касса татнă пек татма пултарать. Эппин, тăшманпа вирлĕрех çапăçмалла, ăна пĕтермелле — вăл çын пурнăçне те, пилеше те ан таттăр...

«Çанталăк çав тери хитре. Тўпере çап-çутă, катрам-катрам пĕлĕтсем иртеççĕ. Хĕвел ăшшăн, ачашшăн кулать. Хырсем, чăрăшсем пĕр хускалмасăр чăнк лараççĕ. Гриша, таврана лайăхрах тинкерес тесе, кăшт çĕкленчĕ. Çав самантрах ун бруствере çине иккĕçĕ пуля чăк! та чăк! туса, тăпрана сирпĕтсе, çăтăр-çатăра хуçса кĕрсе кайрĕç». (206—207 с.).

Асăрхатпăр: Хăшпĕр ўкерчĕксем герой кăмăл-туйăмĕпе килĕшўллĕ, теприсем — хире-хирĕç. Çутçанталăкĕ мĕнле хитре пулсан та, куратпăр, юнашарах вилĕм çўрет.

Акă, тата çавăн пек ўкерчĕк:

«Çамрăк хурăн çине пĕчĕкçĕ кайăк пырса ларчĕ. Пĕр турат çинчен теприн çине вĕçет. Пĕр самант та шăпăрт тăмасть, вĕлтĕртетет кăна. Тĕкĕ хăмăртарах унăн. Сарăрах хăмăр тĕслĕ... Çак кайăк вирлĕ юрламасть. Унăн сасси темле янăраса, кĕрлесе каймасть. Çапах та вăрмана çитсен, чи малтанах, ун шухă та хаваслă юррине илтетĕн. Татăклăн-татăклăн кĕвĕлет вăл кĕввине. Чăв! Чăв-чав! Шив-шив! Çак юрăçа саркайăк теççĕ. Вăл, хăй тĕллĕн вĕреннĕ солист пекех, ытлашши хисеплĕ мар. Çапах та çак кайăк пулмасан, тĕнчере тем çитмен пек туйăннă пулĕччĕ. Халĕ вăл салтак умĕнчех. Пурнăç илемĕ çинчен каласа парать вăл ăна. Тĕнчен вĕçĕмсĕр хитрелĕхĕ çинчен пĕлтерет...» (213 с.).

Çак пурнăçра никам та ытлашши мар. Йывăр аманнă Гриша вилĕм çывхарнине туять. Апла пулин те çутçанталăкăн кашни сăнарĕ ăна пурнăç çинчен шухăшлаттарать. Шив!Шив! юрлакан саркайăкĕ те çĕр çинчи пурнăç мĕнле хитрине аса илтерсех тăрать.

Вĕренекенсене çутçанталăк ӳкерчĕкĕсене тимлĕрех вулама хавхалантарни илеме ăнланма хăнăхтарать. Анчах çав илем пурнăçпа вилĕм хушшинче тăрать. Вилĕм илеме таптасшăн, касса татасшăн пурнăç — чи хитри, пурнăç илемсĕр пулмасть. Гриша Антонов Тăван çĕршывне хӳтĕлесе пуçне хурать. Унăн вилĕмĕ пурнăçа, илеме хӳтĕлени.

Çапла вара, повеçре çутçанталăк ӳкерчĕкĕсем чылай. Вĕсем пурте герой кăмăл-туйăмĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ, хайлав шухăшне ăнланса илме пулăшаççĕ. Повеçĕн ячĕ те хăйех çутçанталăк ӳкерчĕкĕ.

«Унти хырсем тинĕсрен вĕрекен уçă çилпе яланах хыттăн, тунсăхлăн кашлаççĕ. Вĕсем яланах, ĕмĕрех ем-ешĕл. Нихçан та кивелмест хырсен тумĕ. Нихçан та... Совет салтакĕн паттăрлăхĕ те яланах çап-çуттăн çуталса тăрать. Нихçан та тĕксĕмленмест. Нихçан та...» (216 с.)

Çавăнпа писатель повеçе «Хырсем ĕмĕрех ем-ешĕл» тесе ят pană. Илемлĕ литература произведени чĕлхине тишкерни хитрелĕхе, сăнарлăха ăнланма, туйăма ӳстерме, писатель пултарулăхне хаклама хăнăхтарать. Текстри çутçанталăк ӳкерчĕкĕсене тупса вĕсене ăнлантарма вĕрентесси произведени чĕлхине тишкерессин пĕр çулйĕрĕ.

ЛИТЕРАТУРА ТЕОРИЙĔ: Синтаксисла параллеллĕх, танлаштару, япалана чĕрĕлетсе кăтартни (олицетворени), пейзаж ăнлавсем.

## ТĔПЧЕВ-ТИШКЕРӲ

**Тема:** «Ялта» драмăри тавлашуллă ыйтусем.
(Ф. П. Павловăн «Ялта» драмине вуласа тухнă хыççăнхи пĕтĕмлетӳллĕ калаçу).

**Урок тĕллевĕсем:** «Ялта» драма тăрăх Ф. П. Павлов ăсталăхне туйса илме хăнăхтарасси.

—Ачасен тĕпчевлĕ шухăшлавне аталантарса пĕтĕмлетӳсем тума вĕрентесси.

**Учителĕн малтанхи ĕçĕ:**

Ф. П. Павлов пултарулăхне вĕренес умĕн ачасене «Ялта» драмăра тавлашуллă, хирĕçӳллĕ самантсем пуррине асăрхаттармалла. Вуланă май тимлĕ пулма, шухăшлаттаракан вырăнсене палăртса тетраде çырса хума сĕнмелле.

Вулавăшран писатель пултарулăхне уçса паракан материалсене: кĕнекесене, хаçатсенчи тата журналсенчи статьясене илсе тишкерме хушмалла. Произведение пĕтĕмпех вуласа пĕтерсен (урокра, рольсем тăрăх) драмăн хрестоматире çук сыпăкĕсемпе паллаштармалла.

Темăна вĕренсе пĕтерсен драмăна тишкерсе пĕтĕмлетӳ урокĕ ирттересси çинчен, пĕтĕмлетĕве класри кашни ачах е вулакан пек, е тишкерӳçĕ пек, е тиркевçĕ пек хутшăнса сăмах каламаллине пĕлтермелле.

Урока йĕркелекенсем: Ертсе пыракан — учитель.
Вулакансем, тишкерӳçĕ, тиркевçĕ, Ванюк, Елюк, Çтаппан, автор.

**Урок йĕрки:**

Автор умсăмахĕ. Ф. П. Павлова кăтартакан вĕренекен писателĕн чăваш литературинчи вырăнĕ пирки пĕрремĕш сăпатран каласа парать. «Ялта» драма вулакансене те, тишкерӳçĕсене те самаях калаçтаракан классикăллă произведени. «Ялта» драмăри сăнарсене, ĕçсене кашниех — вулакан та, куракан та—хăйле ăнланни кирлĕ. Çавăнпа автор драмăна вулакансен шухăшĕсене пĕлесшĕн.

Ертсе пыракан: «Ялта» драмăна вуласа тухрăмăр. Пирĕн куç умĕнче Пĕрремĕш Тĕнче вăрçи вăхăтĕнчи ялти пурнăç, Ванюкпа Елюкăн телейсĕр шăпи, Çтаппан иртĕхĕвĕ. Вулакансене «Мĕншĕн Ванюк Елюка персе вĕлерчĕ-ши?» ыйту интереслентерет, тишкерӳçĕсем çакăн сăлтавне уçса парасшăн ăшталанаççĕ, тиркевçĕсем вара çакăн пек пулса тухнишĕн кама-тăр айăплама пăхаççĕ. Эппин, эпир те хамăра вулакан, тишкерӳçĕ, тиркевçĕ, драмăри геройсен вырăнне хурса пăхăпăр. Пирĕн пĕтĕмлетĕве авторĕ хăй хаклĕ.

Ыйту: Мĕнле çын вăл Ванюк?

Вулакансем хӑйсен шухӑшне калаҫҫӗ. Тишкерӳҫӗ учебникра Ванюк сӑнарне уҫса панипе паллаштарать.

«Ванюк — ҫирӗп, хӑюллӑ ҫын. Хӑйне те, савнӑ ҫыннине те хӳтӗлеме пултарать. Ӗҫе юратакансккер, йывӑрлӑхсенчен хӑраса тӑмасть. Хӑйӗн телейне тупасшӑн. Ванюк усал ҫын мар. Юратура та, савӑнӑҫпа хурлӑхра та шанчӑклӑ, тӳрӗ ҫын. Ванюк трагедийӗ— тавракурӑмӗ ансӑрринче.

Тиркевҫӗ: Ванюк — питӗ хӗрӳ, сасартӑках ҫилленсе кайма пултаракан ҫын. Савнӑ ҫынни Елюк та унран хӑрарах тӑрать. Ҫыннӑн чунӗнче мӗн пулса иртни пирки шухӑшламасть вӑл — тӳрех чӗрре кӗрсе каять. Хӑйне хӑй тытса чараймасӑр Елюка персе вӗлерет. «А, сан пата ҫын килнӗ-и? Кала тӳррипе, унсӑрӑн пурпӗр чунна кӑларса илӗп!» «Эсӗ те мана улталас тетӗн-и, йытӑ ами?»

Вӗренекенсем Ванюк ячӗпе хӑйсен шухӑшне калаҫҫӗ.

Автор: Ванюк шӑпи ыттисенчен синкерлӗрех-тӗр. Хам телее тупрӑм тесе шанса пурӑннӑскер, нимсӗрех тӑрса юлать: вӑрҫӑ ӑна (патша хесмечӗ) мӑшӑрӗнчен, ачинчен, ялӗнчен уйӑрса каять, ҫын пурнӑҫне ним вырӑнне хуманни патне илсе ҫитерет.

«Виҫӗ уйӑх Австрире тыткӑнра пурӑннӑ чух эпӗ кун пек пуласса шухӑшламанччӗ. Ах, килте мана юратакан юлташ пурӑнать тесе тыткӑнран тухса тартӑм. Хамӑр яла курсан чун хӗпӗртенипе чӑтаймарӑм — макӑрса ятӑм. Яла ҫитсен — ялӗпе туй сикет. Кам туйӗ ку, тетӗп... Пӗр сӑмах та чӗнмеҫҫӗ, йытӑран тарнӑ пек тараҫҫӗ. М-мх!.. Ман юн тӑкӑнни сан пуҫ ҫине килтӗр!»

Юратнӑ мӑшӑрӗ Елюк йышӑнманни Ванюка пӗтерет. (Ара, малтан мӗн пулса иртнине пӗлмест-ҫке вӑл). Малтанхи Елюкӗ малarах ъилнине те (шыва сикнине) ӑнланаймасть. Пӗччен юлать Ванюк, пӗчченлӗх синкерӗ ку».

Ертсе пыракан: Мӗнле ҫын вӑл Елюк?

Вулакансем, тишкерӳҫӗ, Елюк хӑйсен шухӑшӗсене калаҫҫӗ.

Тиркевҫӗ: Елюк — питӗ ҫемҫе ҫын. Вӑл хӑйне хӳтӗлекенсӗр пурӑнаймасть-тӑр. Хӑюлӑхӗ пур ӗнтӗ. Хӗрле Ванюка пӳрте чӗнсе кӗртни, Ҫтаппана хирӗҫ тӑма пултарни. Хутла пӗлменни, пурнӑҫа ытла ансат ӑнланни ӑна хӑйӗн картинчен тухма памасть, хӑвӑрт хуҫӑлса ӳктерет:

«Эх, мӑнтарӑн пурнӑҫӗ... Пӗртте арлас килмест. Пӗр пыра тӑрантасшӑн ҫын тарҫи пулса тӑтӑм. Хӑш чухне хытӑ хурланнипе сан ҫинчен те манса каятӑп. Мӗнле пурӑнас, мӗнле пурӑнас...?»

Пӗччен пурнӑҫа саплаштарма хапрӑк савӑта ӗҫлеме кайӗччӗ — анчах Йӑскар каланӑ сӑмахсем хӑратаҫҫӗ:

«Пӗлетӗн, хӗрарӑмӑн пӗр хак: май килчӗ — тутӑ, май килмерӗ

— çакăнса та вилĕн».

Çавăнпа хăйĕн хӳтлĕхĕсĕр юлсан уншăн тек пурнăç çук. «Вилнĕ пулсан вара эпĕ те вилетĕп».

Хăйне шывран туртса кăларнă Çтаппана тӳрех качча тухма килĕшнине мĕнле ăнланмалла-ха тата? Ара ăна хӳтлĕх кирлĕ вĕт.

Ертсе пыракан: Елюкпа Ванюка лайăх ăнланас тесен çак самантра аса илер-ха. Мĕншĕн Елюк Çтаппан ун патне пырсан Ванюк таврăннине илтсе алăка çаклатса лартать?

Вулакансем, тишкерӳçĕсем, тиркевçĕ, геройсем хăйсен сăмахне калаççĕ. (Хуравсем: Елюк çапăçу пуласран хăрать. Çтаппана вĕлерсе пăрахасран хăрать. Хăйне çакланасран хăрать. Намăс пуласран хăрать, т. ыт. те.) Тишкерӳçĕ : Елюкăн хусканăвĕсене, ĕçне çеç пăхмалла мар, шалта, чун-чĕринче мĕн пулса иртнине те курмалла.

Автор асăрхаттарăвĕ «Елюк: тухса кай часрах, шуйттан! Эсĕ мана пĕтересшĕн-и?»

Ертсе пыракан: Тавлашмалли ыйтусем татах пур. Сăмахран, мĕншĕн Елюк шыва сикет?

Вулакансем, тишкерӳçĕ хăйсен сăмахне калаççĕ.

Елюк: Ванюксăр пурнăç пурнăç мар. Ман çине йывăрлăхсем умлăн-хыçлăн тиенчĕç. Пӳртĕмĕр çунса кайрĕ, ачамăр вилчĕ, унтан Ванюк вилни çинчен хут килчĕ. Пуçăм веçех арпашса кайрĕ.

Автор вулать: Ванюк, Ванюк ăçта эсĕ? Илтместĕн-и хăвăн юратнă юлташна? Çук, эсĕ илтместĕн... Ман чун хурланать, чĕрем макăрать... Эсĕ катари чикĕре тапранмасăр выртатăн... Юн юхать:.. Шăлне йĕрнĕ... (Хăраса ухмаха ернĕ пек кăшкăрса ярать.) Аха-ха-ха-ха!... (Чупса тухса каять.)

Тиркевçĕ: Çак самантран эпир Елюка çухатрăмăр. Малалла шывран туртса кăларнă Елюк текех Ванюк арăмĕ Елюк мар ĕнтĕ. Вăл япала пек çеç.

Автор вулавĕ: Елюк: (Çтаппан çине пăхса) ман пурнăça çăлнăшăн — эпĕ санăн...

Ванюк ăна хăй патне таврăнма тем пек ӳкĕтлесен те Елюк таврăнмĕ — вăл телейлĕ пулас çук:

«Эй, телейсĕр Ванюк. Эпĕ те сана нумай кĕтрĕм. Анчах турă тепĕр тĕслĕ çырнă. Эпĕ ĕнтĕ сан пата пырсан хам телее тупас çук. Каярах пултăн. Чăннипе каласан, эпĕ сана хĕрхенетĕп. Сут тăвас тетĕн пулсан, сут ту — санăн ирĕк».

Тиркевçĕ: Çак сăмахсене малтанхи Елюк калĕччĕ-и? Çук. Кам айăплă Елюк кайран çапла каланишĕн? Вăрçă тискерлĕхĕ-и, Çтаппан ултавĕ-и, Елюк çемçе кăмăллă пулни-и, турă тепĕр тĕслĕ çырни-и, е хăйĕн çулне — хĕрарăмăн çулне тупайманран-и?

Ертсе пыракан: Мĕнле çын вăл Çтаппан?

Тишкерӳçĕ: Çтаппан — хăйĕн пуянлăхĕпе иртĕхет, пурне те хăратать, пусмăрлать. Намăссăр. Çынна шеллемест,ултавçă, ас-кăнчăк. Ванюкпа Елюкăн телейне тататъ.

Тиркевçĕ: Мĕншĕн Çтаппан çапла-ши? Пурте умра, ăнланмалла пек. Анчах та Елюк: «Ах, мĕн-ле çын вăл, Çтаппан...», Пăрчкан: «Ах, мĕнле çын эсĕ» Унăн та, Ванюкпа Елюкăнни пек телей патне туртăнасси пур. Вăл çав телее шырамасть мар — шырать. Пуян тетпĕр, анчах укçара шырать-ши вăл телее? Çук-тăр... Каччăлăх ĕмĕрĕ хăвăрт иртнĕ унăн (хăйĕнчен те килмен-тĕр çакă), арăмĕ телей кӳреймест — Елюк патне туртăнать Çтаппан, Пăрчкан çумне çыпçăнать — вăл та савăнтараймасть, каллех Елюк патнех туртăнать Çтаппан. Ултавĕ те, ирсĕрлĕхĕ те, намăссăрлăхĕ те уншăн ним те мар. Елюка çеç хăйĕн тăвасчĕ. Вара телейлĕ пулĕччĕ. Хăйĕншĕн çеç вăл. Хăй тĕрĕс мар тунине те, çынна ыраттарнине те ăнланмасть, ăнланасшăн та мар. Çтаппанăн трагедийĕ ку, çав вăхăтăн трагедийĕ.

Автор вулать: Çтаппан: Эпĕ ӳсĕр мар Елюк. Ĕçнĕ пулсан та ӳсĕр мар. Ман пуç урă чухнехинчен те урăрах. Эпĕ хам кăкăра акă çапла уçса кăтартма пултарсан, эсĕ мана кăштах та пулин хĕрхенĕттĕнччĕ...

Çав тĕлех тата пĕрре сана чиркӳре куртăм. Эсĕ мана туррăн таса ангелĕ пек курăнса кайрăн. Çавăнтан пуçласа эсĕ манăн чĕрене ăмăрткайăк чĕрнисемпе чавса илнĕ пек (аллипе чавнă пек туса кăтартать) кĕрсе лартăн. Юрататăн-и эсĕ мана?

Ак, мĕнле çын вăл Çтаппан.

Ертсе пыракан: Çапла, Ф. П. Павлов пирĕн куç умне XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш ялĕнчи уйрăм çынсен шăпине илсе кăтартать. Шеллевлĕн сăнарлать вăл хăйĕн геройĕсене — Ванюка, Елюка, Çтаппана. Ытти персонажсен шăпи те савăк мар. Мĕн кĕтет вĕсене пурнăçра? Мĕнле пурăнмалла? Драмăри юрă-сăвă та савăнтараймасть вулакана. Вĕсем синкерлĕхе çеç систереççĕ. Автор хăй те геройсемпе пĕрле асапланать, вĕсене хĕрхенет вăл, вĕсемшĕн хуйхăрать. Çак хĕрхенĕве эпир те туятпăр. Çав хĕрхенӳпе хуйхăрăва, асапланăва эпир те хутшăнатпăр. Хамăр сисмесĕрех, драмăна вуланăçемĕн, тимлĕ кашни сăмаха ăша хывса автор шухăшне те, геройсен синкерне те ăнланса илетпĕр. Çук, пуяннисемпе чухăннисен хушшинчи хирĕçĕве тĕпе хурса мар, тен вуçех те ăна мар, çынпа çын хушшинчи хутшăнăва, пурнăç тупсăмне тĕпчет автор. Эпир те çавăн çинчен шухăша путар. Елюк калашле: «Мĕнле пурăнас?...»

Киле ĕç: Класри хайлава хатĕрлен,

Темăсем: 1. «Ялта» драмăна пĕтĕмĕшле тишкерни.

2. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнчи чăваш çыннисен пурнăçĕ.

Сĕннĕ литература: Ф. П. Павлов. Çырнисен пуххи. 1 т. 1962,— 59—100 стр. Федор Павлов. Пьесăсем. Ш., 1982 ç. «Хыпар» кĕнеки. 3№. Ш., 1992, авăн, 26.

Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв?
Аякра-ши, çывăх-ши?
Аякра та, çывăх та
Каласа парам, тăхта.

**Петĕр Хусанкай.**

## ШКУЛТИ КРАЕВЕДЕНИ

Юрататăп-и эпĕ Тăван çĕршыва? Юрататăп. Çак сăмахсене эпĕ те, эсĕ те, тепри те калама пултарать. Анчах та ытларах чухне эпир Тăван çĕршывăмăр тенинче темле пысăк, хамăр та ăнлантарса параяс çук пĕлтерĕш çинчен шухăшлатпăр. Вăл вара таçти инçетлĕхре те мар иккен, хамăр умрах, кашни кун ура пусса çӳрекен сукмакранах пуçланать. Малтанах çав пĕлтерĕш сăпка юррипе çыхăнать, унтан «тăван» сăмах хăй анлăшне кил-картишрен урама, урамран яла, района, республикăна сарать. Сăмахĕ те мĕнле çывăх — тăван. Вăл çынна чуншăн, чĕрешĕн те питĕ çывăх ăнлавсене пĕрлештерет.

Пирĕн вара, çамрăк ăрăва тăван енĕн, тăван тавралăхăн чикĕ-сĕр илемĕпе анлăшне юратма, хисеплеме, упрама вĕрентмелле. Çапла çеç ачасем чăн патриот, интернационалист пулса çитĕнĕç.

«Çĕнни патне утнă чухне киввисĕр май çук», «халăхăн малашлăхĕ историе манманнинче», «ӳсекен ăрăва таса чун-чĕреллĕ пулса çитĕнтерессинче тăван историйĕмĕр пулăшать». Çапларах шухăшсем пулчĕç чăвашсен Аслă пухăвĕнче. (Чăваш наци конгресĕ, Шупашкар, 1992 ç., юпа 8—9.) Чăваш чĕлхипе культурине сыхласа хăварас тата малалла аталантарассинче краеведени пысăк пулăшу парать.

Пирĕн республикăра тăваньене тĕпчес ĕç тахçантанпах пырать. Кăна ĕнентерекен фактсем чылаях. Акă, сăмахран, Элĕк районĕнчи Чăваш Сурăмĕнчи краеведени музейĕ, Тăвай районне кĕрекен Чӳкçырмари Тăваньен музейĕ тата ыт. те. Вĕсем Чăвашьенре ырăпа палăрнă. Вĕсен ĕçне вĕренеççĕ те, тĕпчеççĕ те. Чӳкçырмари тăхăр çуллăх шкулти музей ĕçне республикăра çеç мар, тулашра та пропагандăлаççĕ. Кунта вĕренӳпе воспитани ĕçĕн шăнăрĕ пĕтĕмпех музейра пулса иртет. Тĕрĕссипе шкулĕ те хăй музей комплексĕн шутне кĕрет. Музейĕн ертӳçи шкул директорĕ В. Ф. Демидов çак ĕçĕн ыррине лайăх ăнланать, çавăнпа та ăна пур енлĕн, тĕллевлĕн, кашни вĕренекене, вĕрентекене хутшăнтарса пурнăçласа пыма тăрăшать.

Вăрмар районĕнче çак енĕпе юлашки вăхăтра ырă пуçарусем нумай тунă. Энĕшпуçĕнчи вăтам шкулти Паттăрлăх музейĕ лайăх

ĕçлет, Мăнçырмари, Чупайри вăтам шкулсенче Тăваньен музейĕсем йĕркеленĕ. Асăннă шкулсенче музейсем уйрăм пӳлĕмсенче вырнаçнă, ытти çĕрте класра е коридорта краеведени кĕтесĕсем пур. Район центрĕнче, Вăрмарта, краеведени музейĕ урăх, уйрăм çуртра ĕçлеме пуçланине палăртмалла, вăл краеведсене пĕр ушкăна чăмăртаса шыравпа тĕпчев ĕçне сулмаклăрах сарса яма пулăшасса шанас килет.

1992—93 вĕренӳ çулĕнчен пуçласа шкулсенче «Чăваш халăх культурипе историйĕ» предмет вĕренме тытăнчĕç. Унăн пуласлăхĕ пысăк. Малашне, тен, аслă классенче чăваш литературине те çак предметпа тачă çыхăнтарса вĕрентмелле пулать-тăр. (Кунта сăмах уроксенче ку е çав ыйтупа каласа иртни мар, вĕренӳ комплексĕ тăвасси çинчен пырать). Эппин, Тăваньен историне тĕпчесси шыравсем йĕркелесси чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен учителĕн чи пирвайхи тивĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать. Маларахри çулсенче çакна ытларах класс тулашĕнчи ĕçсемпе çыхăнтаратчĕç. Халĕ вара, программăна çĕнĕ предмет кĕртнĕ май, тата ăна вырăнти условисене кура мĕнле кирлĕ, меллĕрех — çапла улăштарма пулнине шута илсен, шыравпа тĕпчеве вĕрентӳрен уйăрмасăр пурнăçламалла. Тăваньен музейне йĕркелесе ăна пуянлатса пырасси, унтан та ытларах — уроксенче çак ĕçпе тухăçлă усă курасси вĕрентӳпе воспитани комплексĕнчи пĕр пай (малтан асăннăччĕ: Чӳкçырмари тăхăрçуллăх шкулта музей вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн тĕп шăнăрĕ) пулса тăрать. Музее ячĕшĕн тăвасси çинчен мар, çав музей вĕрентӳре пулăштăр, ачасене шыравпа тĕпчев ĕçне явăçтарса ырă чунлă пулма, Тăван çĕршыва, çынсене юратма хавхалантартăр тесе ĕçлемелле учитель-краеведăн.

Шырав - тĕпчев ĕçĕ темле ырă пулсассăн та ăна плансăр пурнăçлама çук. Краеведени ĕçне мĕнлерех йĕркелесе ярасси çинчен тĕрлĕ литература чылай тухнă. Вĕсем шулта библиотекăсенче пулма кирлĕ. Чăваш учителĕшĕн В. П. Никитин хатĕрленĕ «Чăвашьенĕн литература вырăнĕсем» вĕренӳ пособийĕ (1984) паха пулмалла. Анчах та ăна аслă шкулта вĕренекенсемшĕн кăларнă, вăл сутлăхра пулман. Çавăнпа кĕнекене университет библиотекинче тата республикăри М. Горький ячĕллĕ библиотекăра çеç илсе вулама пулать.

«Литература краеведенийĕн хăшпĕр паллăрах принципĕсене палăртса хăварăпăр:

1. Шкулти краеведени ĕçĕн калăпăшĕ, мелĕсем вĕрентӳ программипе çирĕп çыхăнса тата ачасен аталанăвĕпе, пĕлĕвĕпе, пултарулăхĕпе шайлашса тăмалла;

2. Тăван тавралăха тĕпчессине пур предметсемпе те (истори,

географи биологи, литература, фольклор) пĕр килĕшӳллĕ (комплекслă) туса пымалла;

3. Краеведение куллен тата системăллăн йĕркелесе аталантармалла;

4. Шыравсене тĕпчевлĕ ирттерме хăнăхтарса, вĕренекенсен пултарулăхне пĕр чарăнми ӳстермелле;

5. Краеведени пурнăçпа çыхăннă усăллă енĕсене çĕнетсе, пуянлатса пымалла;

6. Краеведени ĕçĕнче ачасен малашлăх çул-йĕрне палăртма (профориентацие) май паракан енсемпе усă курмалла;

7. Литература краеведенийĕн ĕçне интернацилле воспитани тĕллевĕсемпе пĕрлештермелле;

8. Краеведени йĕрлевĕсене тăван халăх культурин палăкĕсене упрассипе тӳрремĕнех çыхăнтармалла.

(В. П. Никитин. Чăвашьенĕн литература вырăнĕсем. 20 с.)

Куртăмăр ĕнтĕ, асăннă принципсем шырав-тĕпчев ĕçĕн тĕп çул-йĕрĕсем пулаççĕ. Вĕсене литература краеведенийĕшĕн палăртнă пулин те вĕсемпе тĕллевленсе пырсан учитель-краеведăн ĕçĕ чылай çăмăлланĕççĕ.

Краеведени ĕçне пĕтĕмлетсе тăраканни — краеведени музейĕ е краеведени кĕтесĕ. (Паллах, музейшăн уйрăм пӳлĕм уйăрни вырăнлăрах ĕнтĕ, анчах чылай çĕрте ун пек тума май çукрах пулмалла.) Чăваш краеведени музейĕ тенине Тăваньен музейĕ темелле пулĕ. Эпир асăннă автор (В. П. Никитин) çапла çырать: «Хутлăхри шкулсем кабинетсемпе пӳлĕмсене, музейсене пĕр еьĕрлĕ тăваççĕ, вĕсене специализацилемелли майсене пĕлсех çитмеççĕ: ытларах чухне краеведени музейĕ археологипе этнографи управĕ пулса каять, тепĕр чухне Мухтав пӳлĕмĕ пек курăнать. (22 с.) Эппин, мĕнлерех пулмалла-ха шкул музейĕн?

Тăваньен музейĕ ачасене шырав-тĕпчев ĕçне пур енлĕн туса пыма явăçтартăр: тăван тавралăхăн историйĕнчи ĕлĕкхипе хальхине кăтартасси; археологипе этнографи шыравĕсем ирттересси, япаласем пухасси, литература çыхăнăвĕсене йĕрлесси, тăваньенĕн мухтавлă çыннисене, паттăрĕсене чысласси, вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсен картотекине пуçтарасси, тăван шкулпа хуçалăх пурнăçне çутатасси, вырăнти çутçанталăка, çĕр-шыва кăтартасси (упрасси) тата ытти тем тĕрлĕ ыйту та.

Çапла вара, ĕç тĕллевĕсене палăртрăмăр. Шыравпа тĕпчевре пухăнакан материалсене упрамалли пӳлĕм е кĕтес пур. Учитель-краеведăн шырав-тĕпчев ĕçне хăш класс ачисене явăçтарсан лайăхрах-ши, тет. Кунта пиллĕкмĕшсене пĕчĕкрех-ха тесе, вунпĕрмĕшсене вăхăчĕсем сахалрах тесе уйăрни кирлĕ мар. Ачасене

кăсăклантарса яни, шыравçтĕпчев ĕçĕн ӳссине ăшпиллĕн ăнлантарса пыни выранлăрах. Кашни ӳсĕмри вĕренекен хăйне юрăхлă, ал çеммиллĕ ĕçсем пурнăçлама пултарать. Учителĕн ачасен пултарулăхне, хăш предметпа ытларах кăсăкланнине шута илмелле. Биологипе тăрăшса вĕренекене тăван çутçанталăка сăнама, ăна çутатакан экспонатсем (йывăççен, тăпрасен, ӳсентăрансен тĕслĕхĕсем, вырăнта пурăнакан кайăк-кĕшĕксен ӳкерчĕкĕсем тата ыт. те) пуçтарма хавхалантармалла, историпе интересленекене тăван ял мĕнле пуçланса кайнипе кăсăклантармалла.

Ак, эпир Чупайра пĕрлешӳллĕ хуçалăх мĕнле йĕркеленсе кайни пирки калаçрăмăр (истори предмечĕ — коллективизаци юхăмĕ, литература урокĕнче — писательсем çав вăхăта мĕнлерех çутатса пани). Ачасем аслашшĕсемпе асламăшĕсем, кукашшĕсемпе кукамăшĕсем урлă тем чухлĕ экспонат тупнă: пирвайхи колхозниксен сăн ӳкерчĕкĕсем, хаçатсем, тĕрлĕ документсем, ĕç тумĕсем тата ыт. те Ку пуçламăшĕ кăна-ха. Шыравçтĕпчеве малашне кашни тапхăрпах йĕркелеме пулать — ан ӳркен çеç. Калăпăр, 30-мĕш çулсем. Кашни çулĕ — хăй истори.

Краеведени ĕçĕнче археологипе этнографи шыравĕсене ирттерни питĕ кăсăклă та усăллă пулмалла. Ку ĕçсене пур ăстрăмри вĕренекенсем хавaспах хутшăнаççĕ.

Пирĕн тăрăхра археологи палăкĕсем пур-и? Вĕсене ятарлă управ шутне кĕртнĕ-и? Халăхра Улăп тăприсем çинчен калаçнине илтнĕ-и? Килте, хуçалăхра археологи тĕлĕшĕнчен хаклă япаласем пуррине асăрхаман-и? (Паллах, кунта ачасене малтан археологи тĕлĕшĕнчен паллă япаласен ӳкерчĕкĕсене кăтартмалла). Чăвашсен ĕлĕкхи тумĕсем килте упранаççĕ-и? Вĕсене музее пама май пур-и? Çав тумсен, вĕсенчи тĕрĕсен уйрăмлăхĕсем мĕнре? Ĕлĕкхи ĕç хатĕрĕсене пĕлетĕр-и? Тата ытти нумай ыйту тавра ĕçлеме пулать. Ачасем хăйсем çуралса ӳснĕ таврaлăхăн хальхипе ĕлĕкхине танлаштарма пултарччăр. Тăван халăхăмăрăн ĕлĕкхи кун-çулне пĕлмесĕр ăс-хакăл та, культура та, шухăшлав та пур енлĕн аталанаймĕччĕ.

Халăх пурнăçне кăтартакан этнографи пайĕ тулли те интереслĕ пултăр тесен питĕ нумай ĕçлемелле. Тĕрлĕ сăлтавсене пула этнографи япалисем нумаях сыхланса юлайман, тен, сыхласа хăварма тăрăшман-тăр та. Анчах та асаннесемпе кукамайсен çӳпçисемпе арчисенче ачасене тĕлĕнтермелĕх япаласем пурах ĕнтĕ. Эппин, хуть пулас ăрусем валли упрасчĕ. Çак ĕçе темиçе çул-йĕрпе пурнăçлама пулать:

1. Наци тумĕсем.
2. Тĕрĕсемпе эрĕшсем.

3. Йăла-йěркере усă куракан япаласем.
4. Ěç хатěрěсем.

Пирěн музейра вунă ытла тěрлě сурпан пур. Вěсене хăй вăхăтěнче чăваш хěрупраçěсемпе хěрарăмěсем тěртсе те, тěрлесе те ăсталанă. Вунă ытла сурпан... Вунă сурпанěнче çěр тěрлě тěрě. Вěсене ăнланас тесен мěн чухлě шырав ирттермелле, мěн чухлě статья-кěнеке вуламалла. Чăваш хěрарăмěн кěписем, тухйи, хушпувě. Вěсем урлă йăхташăмăрсен пурнăçне те куратпăр, ал ěç ăсталăхěпе тěлěнетпěр, тěнче çине мěнлерех пăхнине ăнланатпăр.

Музейра мěнле экспозицисем йěркелеме пулать-ха? Тăван тавралăхăн пурнăçне пур енлěн кăтартас тесен çапларах туни вырăнлăрах пуль.

1. Тăван тавралăх ěлěкхи вăхăтра (1917 çулччен). Кунта ял историйěпе çыхăннă экспонатсем, археологипе этнографи япалисем тата ытти те вырăн тупать.

2. 1917 çул хыççăнхи вăхăт. Ял, район, республика историйěнче палăрнă пулăмсем. (Революци çулěсем, граждан вăрçи, хуçалăха çěкленě вăхăт, коллективизаципе çыхăннă документсем, 30-мěш çулсенчи синкерлěхпе çыхăннă материалсем тата ытти те).

3. Вěсем Тăван çěршыва хўтěленě. (1941—45 çулсенче ентешсем фашизма хирěç паттăррăн кěрешни, тылра хастар ěçлени).

4. Тăван шкул историйě. Вěсем пирěн шкулта вěреннě.

5. Тăван хуçалăх аталанăвě.

6. Çутçанталăк кěтесě.

Паллах, çак схемăна пěртен-пěр тěрěсси тесе шутламалла мар. Анчах та вăл шырав-тěпчев ěçне пěтěмлетмелли чи меллě, йěркеленсе çитнě çул-йěр. Çакна республикăри музейсен ěçне-хěлне сăнани те çирěплетет. Учитель-краевед хăй пурăнакан вырăн условийěсене кура шырав-тěпчев ěçне килěштерет. Çапла çеç краеведени усăллăрах та тухăçлăрах пулě.

Шкулти краеведени ěçěн дирижерě — ытларах чухне чăваш чěлхипе литература учителě. Акă, сăмахран, вăл хăй ěçěпе тўремěн çыхăннă шыравсем, тěпчевсем ирттерме пултарать. Кашни районтанах ўнер ěçченěсем нумайăн тухнă. Кашни ялăнах хăйěн çыравçи, артисчě, художникě, композиторě, юрăçи пулма пултарать. Вěсен пултарулăхне тěпчени ачасене тăван тавралăха юратма, ентешěсене хисеплеме, вěсен ěçěсемпе мăнкăмăлланма, истори саманчěсене çывăххăн ăнланма хавхалантарать. Кěтеснерте чăваш совет журналистикипе литературин сăпки уменче тăнă Г. Алентей тата Чăваш халăх писателě В. С. Алентей çуралса ўснě. Вěсен пултарулăхне лайăх пěлни чăваш литературине тăрăшса вěренме хистет. Анчах асăннă ентеш-çыравçăсен пултарулăхěсене тěпчесе

çитернĕ теме çук. Халăх çыравçин В. С. Алентейĕн эткерлĕхне пухас тĕлĕшпе сахал ĕçлетпĕр, районти музейра та, Кĕтеснерти музейра та ентеш-çыравçăсем çинчен паха материалсем питĕ сахал Эппин, шырав çулĕ уçă.

Халăх пурнăçĕн тĕкĕрĕ — унăн чĕлхийĕ. Вăрмар районĕнче пурăнакан чăвашсен калаçăвĕ хутăш калаçу шутне кĕрет. Çак уйрăмлăхсене тĕпчеме вĕрентмелле учителĕн. Пухса пынă материалпа уроксенче те, музейри калаçусенче те усă курма тăрăшмалла.

Çапла вара, краеведени ĕçне, музей йĕркелессине темиçе таппăра тăсмалла. Ана çулталăк хушшинчех туса çитерме çук. Тĕрĕссипе, кашни вĕренӳ çулĕнче краеведенин çĕнĕ çул-йĕрĕсем, тĕпчев умĕсем уçăлаççĕ. Эппин, çак шырав-тĕпчевĕн вĕçĕ-хĕррийĕ çук. Тăваньен музейне е кĕтесне йĕркелесе çитерсен шырав ĕçне чарса лартмалла мар. Унсăрăн малтан ĕçлени те харама кайĕ, ачасен хастарлăхĕ те сӳнсе ларĕ.

Литературăпа-и, историпе-и, географипе-и, Тăваньен культурипе-и, килĕшӳллĕ пĕр-пĕр темăпа урока краеведени музейĕнче пуçлар-ха. Мĕнле вăрттăнлăхсем пĕлтерĕ вăл ачасене? Шырав-тĕпчев алăкне уçса пĕлӳлĕхпе кăсăклану тĕнчине çаватса кĕрейĕ-и?

Литература


Чĕлхепе литература вĕрентессин хăшпĕр ыйтăвĕсем. 2-мĕш кĕнеке. Шупашкар, 1982.

В. П. Никитин. Чăвашьенĕн литература вырăнĕсем. Вĕренӳ пособийĕ. Шупашкар, 1984.

В. Е. Цыфаркин. Пирĕн ентешсем — ӳнер ĕçченĕсем. Вăрмар, 1991.

## ХАЛĂХ ЙĂЛИ-ЙĔРКИ СЦЕНА ÇИНЧЕ

1991 çулта вĕрентӳ ĕçченĕсен ăсталăхне ӳстерекен институт «Чăваш уявĕсемпе мешехисем» ятлă методика кăтартăвĕсем пичетлесе кăларчĕ. Учительсем унта Тăван ен культурине вĕрентме, халăх традицийĕсене малалла тăсма, уявсем йĕркелеме пулăшакан сĕнӳсем илме пултараççĕ. Çак темăпах тĕслĕ слайдсем те пур. Паллах, ку кăларăм учительсемшĕн тем пекех пысăк парне. Анчах та кĕнеке ытла та пĕчĕк тиражпа тухнăран (1000 экз.) пурин патне çитейместех. Çавăнпа учителĕн ытларах хăйĕн шырамалла, пуçтармалла, тепĕр чухне вăхăтне шеллемесĕр хăйĕнех сценарисем те хатĕрлемелле.

Вĕрентекенсем халăх йăли-йĕркине вĕрентессипе пропагандăлассине икĕ çулпа пурнăçлаççĕ:

1. Йăла-йĕркесем, уявсем çинчен уроксенче туллин каласа ăнлантарса пыни.

2. Йăла-йĕркесемпе, уявсемпе сцена çинчен инсцинировкăласа паллаштарни.

Пĕрремĕшпе ытларах учителĕн ĕçлемелле пулсан, иккĕмĕшĕнче вара çак ĕçе ачасене те явăçтармалла, музыкçăна та пулăшма чĕнмелле. Уяв юрăсăр, ташăсăр пулмасть-çке.

Кунта çакăн пирки те асăрхаттарса хăвармалла. Пĕрисем халăх йăли-йĕркисене стилизацилесрен асăрханмалла теççĕ. Вĕсем ĕлĕкрех мĕнле пулнă çаплипех хăварма сĕнеççĕ. Уйрăмах уявсемпе мешехесене сцена çинче кăтартнă чухне улшăнусем кĕртесрен асăрханма хистеççĕ. Тен, çапла калани тĕпчев çыннисене, артист-профессиналсене юрăхлă пулĕ. Анчах шкул пурнăçĕнче импровизацисĕр май çук. Уйрăмах халĕ, шкул программине «Чăваш халăх историйĕпе культури» предмета кĕртнĕ хыççăн халăх традицийĕсене анлăн пропагандăлама пуçланă май. Анчах та учительсем умĕнче йывăрлăхсем тем чухлех тухса тăраççĕ — хатĕр сценарисем çук. Куракансемшĕн ирттерекен уяв интереслĕ пултăр тесен нумай тăрăшмалла. Çавăнпа ку е çав йăла-йĕркесене, уява кăтартнă чухне вĕрентекенĕн сценарие шӳтлĕ самантсем, вăйăсем (паллах, виçерен тухмасăр) кĕртмелле. Ку уяв теминчен, ăна ăçта тата камсем хутшăнса ирттернинчен нумай килет.

Аялтарах сĕнекен сценари çĕнĕ тырпул ячĕпе ирттерекен уявăн йĕрки. Вăл «Чăваш уявĕсемпе мешехисем» кĕнекере чӳклеме тата кĕр сăри çинчен çырса кăтартнă сыпăксемпе пĕр кĕвĕллĕ. Уява хатĕрлесе ирттерекенсем — аслă класра вĕренекенсем.

Пĕтĕмĕшле йĕркелекенсем — чăваш чĕлхипе литература тата чăваш халăх историйĕпе культури предмечĕсен учителĕсем тата

музыкçă. «Çěнě тырпул» уявне кěркуннехи уйăхсенче концертсенче, тěлпулусенче кăтартса пама пулать.

**«Çěнě тырпул уявěн» сценарийě:**

Кил хуçи пичке е витре йăтса тухать:

Эх, сăри, кěр сăри
Питě тутлă пултăр-и?..
Ялан лайăх пулар-и?
Çынпа ырă пурнар-и?

Кил хуçи арăмě кěрет, сěтелçи йěркелет (куркасем, чей чашăкěсем, кукăль тата ыт. те). Кěтесе тěрěллě алшăлли çакать.

Кил хуçи: Хăнасене чěнтěмěр, тус-тăвана йыхăртăмăр, хурăнташ-пěлěшсене систертěмěр.

Арăмě: Сире те йыхравлатпăр (зал еннелле), тăван чăваш çыннăмăрсем. Пирěн тулли кěрекемěре пăхса савăнсамăр.

Кил хуçи: Пирěн кěреке тулли пуласси пěтěмпех Сиртен килет. Эсир çурпа çу тăршшě мěнле ěçлерěр, мěнле пухса кěртрěр ылтăн тырпулăмăра — çавă кăтартать сěтелçине. Ак, ěнтě, курăр ěнтě,, тулăх-и кěрекемěр, чухăн-и?!

Кěр мăнтăрěпе, çěр-анне тарабатлăхěпе хамăрăн ырă йăлапа Сире пурне те кěр сăрипе çěнě çăкăр уявне чěнетпěр!

Кил хуçи,Арăмě: Чěнетпěр! (Пуç таяççě).

Сцена çине мăшăрăн-мăшăрăн хăнасем кěреççě. Кěреке сěтелě çине хайсен çимěçне хуриччен килěшўллě юрă юрлаççě, е сăвă калаççě, е тупмаллине туптараççě. Чи малтанах «симěс ылтăн» — хăмла илсе кěреççě. Юрă янăрать.

### Хăмла пахчи

**Сăвви П. Ялкирпа Н. Сандровăн.**
**Кěвви Ф. Лукинăн.**

1. Хăмла пахчи укăлчара
Вăрман евěр каш-кашлать.
Колхоз хěрě юрла-юрла
Ăмăртса хăмла татать.

Хушса юрламалли:

Пахчи, пахчи,
Хăмла пахчи —
Ытарма çук илемне.
Чăваш хăмли
Чи хăватли —
Чапě кайрě инçене.

2. Хамăр ĕçчен, ай, пулнăран —
Анса пулчĕç хăмлисем.
Хăна-тантăш, ай, пухăнсан,
Шăранаççĕ юррисем.

Хушса юрламалли:
Пахчи, пахчи,
Хăмла пахчи —
Ытарма çук илемне.
Чăваш хăмли
Чи хăватли —
Чапĕ кайрĕ инçене.

Чăваш уйĕ-хирĕн тепĕр пурлăхне — çĕрулмие илсе кĕреççĕ. Вăл залра лаpакансене курăнмасть. Тупмаллисем калаççĕ: Аякра мар, муклашка та мар, икĕ куçĕ пур (е ытларах та) — чĕрĕ мар, мăнтăр — çăвĕ çук, тум-тирĕ пур — ăшăтмасть, çуркунне пĕрре, кĕркунне — темиçе, мĕн пулать вăл?

Тупмаллине малтан кил хуçипе арăмне параççĕ, лешсем куракансенчен пулăшу ыйтаççĕ. Тупаймасан та, тупайсан та çĕрулмие сĕтел çине хураççĕ. Çавăн пек йĕркепех сĕтел çийĕ суханпа, купăстапа, кишĕрпе пуянланать. Кашни хăйĕн сăмахне калать, кил хуçисене мухтать, хăнасене чыслать. Кил хуçипе арăмĕ кашни хăнана пуç тайса тав тăваççĕ, çĕнĕ сăра сĕнеççĕ, çимĕçсене мухтаççĕ.

Юлашкинчен тепĕр хăна çитет. Вăл чăваш уй-хирĕн, вĕр-çĕнĕ, халиччен пулман çимĕçне илсе килнĕ — çурăмĕ хыçне сеткăпа сахăр чĕкĕнтĕрĕ çакнă. Çимĕçне сĕтел умне хурать. Пурте сарăлса тăраççĕ.

Кил хуçи: Эй, Илтепер, ара, питĕ тутлă çимĕç илсе килнĕ-çке эсĕ.
Илтепер: Хальхи вăхăтра кунтан тутлă çимĕç урăх çук та.

1-мĕш хăна: Ара, ку çимĕçпе мĕн тăвасшăн эсĕ?

Илтепер: Сахăр чĕкĕнтĕрĕнчен сахăр тăваççĕ. Ăна та пĕлместĕр-и? Акă, Сирĕн сĕтел çинче (пырса пăхать) э-э-э, сахăр çук.

2-мĕш хăна: Сахăр чĕкĕнтĕрĕнчен урăххине те тума пулать тет. Хаçатра та пĕркун çырнăччĕ-ха, леш, хăватлине тет.

Илтепер: Кирлĕ мар хаярри, парсан парăр тутлă чăваш сăри.

Кил хуçи: Э-э, çук, сăра тутаниччен çимĕçне мухтаса пире савăнтар.

1-мĕш хăна: Ташлаттарар ăна, ташлаттарар!

Ыттисем: Атьăр, Илтепере пулăшар, унсăрăн пире вăл сахăрпа хăналамĕ.

(Савăнăçлă ташă).

Ĕнтĕ пурте пухăнса çитеççĕ. Хăнасем ик енĕпе тăрса тухаççĕ. Кил хуçисем чи хисеплĕ вырăна ваттине сĕнеççĕ. Ватти тухать.

Пурте ура ҫинче. Мăнаҫлă кěвě илтěнет. Тěрленě алшăлли ҫине хурса хěрпе каччă ҫăкăрпа тăвар илсе тухаҫҫě. Хăнасем тавра ҫаврăнаҫҫě те сěтел умне тăраҫҫě.

Ватти: Хамăртан йăла тумастпăр, ҫěнěрен те кăлармастпăр, асаттесемпе асаннесем, кукамайсемпе кукаҫейсем халалласа хăварнă ырă йěркепе ҫěн ҫăкăрпа кěр сăри уявне ирттеретпěр. Ҫут хěвелěмěр, ҫут ҫанталăкăмăр ăшшипе **ҫěр аннемěр** ӳстернě ҫимěҫе, хура тар тăкса ěҫ ěҫленě ҫěр ҫыннине мухтатпăр.

Ěнтě хатěр-и, эсир, тăван чăвашăмăрсем, хапăл-и, хапăл мар-и?

Пурте: хапăл, хапăл.

Ватти: Ҫут хěвелěмěр, ҫут ҫанталăкăмăр, ҫěр-аннемěр. Сирěн тивлетӳпе пурăнатпăр, ҫавăнпа та Сире ырăпа асăнатпăр. Ҫěнě ҫăкăр-тăварпа, ҫěнě ҫимěҫ тирпейěпе асăнатпăр.

Пурте: ырăпа асăнатпăр.

Ватти: Тăнăҫ та лăпкă пурăнăр, пěр-пěриншěн тус та юлташ пулăр, ҫăкăр-тăварпа сăвап тăвăр, унтан аслă ан пулăр, ěҫрен ан писěр, ватăлăха сума сăвăр. Тайма пуҫăм сире! (Пуҫ таяҫҫě).

**«Алран кайми ака-сухи» юрă янăрать.**

## СУРХУРИ

Чăваш çамрăкĕсем хăй вăхăтĕнче сурхури уявне питĕ чаплă ирттернĕ. Анчах та, вăхăт иртнĕçемĕн çак йăла манăça тухма пуçланă. Юлашки вăхăтра халăхăн ырă йăли-йĕркисене чĕртсе тăратас тесе тăрăшнă май сурхури çинчен те çĕнĕрен аса илме пуçларăмăр. Шкул ачисем чăваш халăхĕн культурипе анлăрах паллашас тесе манăça пуçланă уявсене спектакль евĕр хатĕрлесе куракансем умне кăлараççĕ.

Сурхури — авалхи чăваш уявĕ. Ĕлĕкрех ăна кун ўсме пуçласан, каярах Христос тĕнĕнчи раштавпа кăшарни хушшинче ирттернĕ. Сурхурие ытларах яш-кĕрĕм, ача-пăча хутшăннă. Сурхури ирттерме ятарласа пĕр киле пуçтараннă. Килтен киле пуçтарнă апат-çимĕçрен, сăраран, тĕрлĕ апатран сĕтелçи майланă.

Кил-çурт. Виç-тăвата хĕр сĕтел çине апат-çимĕç лартаççĕ. Аякран хĕрсем юрласа килни илтĕнет. Хĕрсем юрлаççĕ:

**Пирĕн урам анаталла**

**Сăвви халăхăн, кĕввине**
**Ф. П. Павлов йĕркеленĕ.**

Пирĕн урам урам анаталла,
Шуса анать пĕр çуна.
Эп урампа иртнĕ чухне
Йĕрсе юлать хĕрача.

И, çил вĕрет, çил вĕрет те
Çил çĕклентерсе ярать.
Чĕрипеле чăтаймасăр
Йĕрсе юрласа ярать.

Кĕпер çине шыв илет те —
Шур кĕпине кам илет?
Савни савнине илет те
Савманнине кам илет?

Улькка: Сурхури! Сурхури!

Çитрĕ кĕтнĕ сурхури!
Сурхури çитнĕ, куртăр-и?
Хирĕç тухса илтĕр-и?
Хапха уçса хутăр-и?
Атьăр, тухăр, ачасем,
Урам тăрăх кайăпăр,
Килĕрен киле çўрĕпĕр,

Салат-хăмла пухăпăр.
Кукăль-çимĕç пухăпăр,
Сурхурие-тĕк сурхури,
Чаплă пултăр сурхури!
Кĕркури те Варвари,
Пырассине пыратăр,
Сурхурине пыратри?
Кĕмĕл-нухрат паратри?

Курса лараkансене кил хуçи мăйăрпа, пăрçапа хăналать, çакăн пек сăмахсем калать:

Виçĕ тĕслĕ выльăхăр-чĕрлĕхĕр
Хутаçлă пăрçа пек хунавлă пултăр,
Шўтернĕ пăрçа пек мăнтăр пултăр,
Ăшаланă пăрçа пек пиçĕ пултăр,
Пĕр вĕçĕ шыв патĕнче пултăр,
Тепĕр вĕçĕ картара пултăр!

Хĕрсем кулаççĕ, савăнаççĕ. Урамра купăс сасси илтĕнет. Хĕрсем шăп пулаççĕ.

Марине: Ку Иван ьĕт, хĕрсем!

Иван килсе кĕрет, купăспа.

Иван: Сывă-и, хĕрсем!

Купăсне тăсса ярса юрă юрлама пуçлать.

## Эх, Иван

**Сăвви П. Халапсинăн.**
**Кĕвви Г. Лебедевăн.**

Капăр тумпала тухатăп
Урама эп каçхине.
Купăса тăсса яратăп,
Илĕртетăп хĕрсене,
Вăйăа тухăр-ха, хĕрсем,
Сар чечек пек саррисем,
Саррисем, саррисем,
Икĕ çўç хĕрри кăтрисем.

Хĕрсем хирĕç тăрса юрлаççĕ:

Купăспа ăста ьылятăн
Ху та эс чипер сăнран.
Çичĕ хĕр пуçне çавратăн,
Халь саккăрмăшне шыран.
Эх, Иван, эх, Иван,
Намăса ăçта хуран. (2 хут)

Иван малалла юрлать:

Манăн купăс янкăшсассăн,
Каç илемĕ çĕкленет.
Хĕрупраçĕ те хавассăн
Ташламашкăн пикенет.
Ташша тухăр-ха, хĕрсем,
Сар чечек пек саррисем.
Саррисем, саррисем
Çăлтăр евĕр куçлисем.

Хĕрсем хирĕç юрлаççĕ:

Купăс чăн та каç илемĕ
Хĕрсене килентерет.
Купăсçа сар инке-арăм
Вăрттăн кукăль çитерет.
Эх, Иван, эх, Иван,
Намăса ăçта хуран? (2 хут)

Иван: Манăн купăс туй илемĕ,
Унсăр туй та шавламан.
Туй каччи пулмасăр эпĕ
Ялта хĕр каччă кайман.
Качча тухăр-ха, хĕрсем,
Сар чечек пек саррисем,
Саррисем, саррисем
Çырла тĕслĕ сăнлисем.

Хĕрсем юрлаççĕ:

Купăсçи чăнах пит шеплĕ,
Туй тума та пултарать.
Вăтăрта пулсан та халĕ
Каччă шутĕнче пурăнать.
Эх, Иван, эх, Иван!
Епле намăса чătан. (2 хут)

Иван юрлать.

Манăн купăс вăй илемĕ
Кĕмĕл тĕслĕ чĕлĕхсем.
Эпĕ хам та пит тирпейлĕ,
Ма тиркетĕр-ха, хĕрсем?
Мана савăр-ха, хĕрсем,
Сар чечек пек саррисем.
Саррисем, Саррисем,
Сарă кайăк пеккисем.

Хĕрсем юрлаççĕ:

Каçхине çӳрен хавассăн,
Ирхине нумай çывăран.
Ĕçлесе тар юхтармастăн,
Çинĕ чух анчах тарлан.
Эх, Иван, эх, Иван,
Намăса ăçта хуран?
Э-э-х, эс Иван,
Ĕçлеме хăçан тухан?

Иван: Эх, хĕрсем, кӳрентеретĕр эсир мана! Пулмарĕ сирĕн хушăра савни тупасси, каяс-ха юнашар яла, хĕр шырама.

Хĕрсем: Кайса пăх-ха. Унта тата мĕнле «кукăль çитерĕç сана?» (Пурте кулаççĕ). Иван купăсне тăсса тухса каять.

Санюк: Хĕрсем! Эпир Натюшпа çĕнĕ юрă вĕрентĕмĕр.

Хĕрсем: Юрласа кăтартăр-ха! Юрласа кăтартăр-ха!

Санюкпа Натюш юрлаççĕ:

Çурхи вăрманта
Сар кайăк юрлать.
Сар кайăк юрлать.
Сасси ян каять.

Пурте пĕрле: Çурхи илемлĕ, тӳлек лăпкă каçсенче
Эпĕ тухатăп, эп тухатăп урама.
Сана курас, сана курас туйăмпа.
Мĕншĕн тесен юрататăп эп сана.

Санюкпа Натюш: Тĕнчере пĕрре юрату кăна.
Юрату сăмахĕ çунтарать чуна.

Пурте пĕрле: Ах, юратупа выляма кирлĕ мар.
Юрату вăл, юрату вăл вăйă мар.
Юрату вăл хитре сарă чечек мар,
Ăна татма, ăна татма кирлĕ мар.

Пӳрте шакăртатса çветкесем килсе кĕреççĕ. Вĕсем палламалла мар тăхăннă. Ташă кĕвви пуçланать. Çветкесем хĕрсене ташлаттараççĕ. Ун хыççăн çветкесем тухса каяççĕ.

Марине: Хĕрсем, çур çĕр çитет. Атьăр сурăх ури тытма витене! Хĕрсем тухса каяççĕ. Тĕттĕм çĕрте сурăх ури тытаççĕ. Сурăхсем макăрни илтĕнет.

Хĕрсем кĕреççĕ.

Санюк: Мана шурă сурăх ури лекрĕ.

Хĕрсем: А-а-а! Апла пулсан Сантăрах каятăн. Сантăр—сарă каччă.

Укçине: Мана хури çакланчĕ,

Хĕрсем шӳтлесе: Чикана тупса яратăн ĕнтĕ.

Улька: Мана вара ватти çакланчĕ.

Хĕрсем: Ватă урçана качча каятăн пулĕ-ха.

Анук: Хĕрсем, айтăр автан тытса кĕретпĕр.

Хĕрсем: Атьăр, атьăр.

Виçĕ хĕр тухса автан йăтса кĕреççĕ. Автана урай варрине лартаççĕ. Унăн умне шыв, тырă, укçа, кăмрăк, çăкăр хурса параççĕ.

Анук: Автан тус, автан тус, ман пулас савни мĕнле пулассине кăтартса пар.

Автан хăй умĕнчи шыва ĕçет.

Хĕрсем: Ай-уй, Анук, чĕрккене кăмăллаканни пулать сан савни!

Анук: Çавăн пекех-ши вара?

Улька: Халĕ, автан тус, ман савни мĕнле пулассине кăтартса пар.

Автан тырă таккать.

Хĕрсем: Пуян, çирĕп хуçалăхлă савни пулать сан.

Санюк: Автан тус, а-а манне те кăтартса пар-ха.

Автан кăмрăк таккать.

Хĕрсем: Чухăн пулать сан савни.

Марине: Халĕ, автан, ман савни мĕнле пулассине кăтартса пар.

Марине: Пăхăр-ха, пăхăр-ха, укçа таккать ман автан, укçа таккать!

Хĕрсем: Чăнах! Пуян Петĕре качча каятăн пулĕ-ха?

Натюш: Хĕрсем, çур çĕр çитрĕ. Айтăр, мунчана! Куçкĕски витĕр пăхăпăр.

Хĕрсем мунчана каяççĕ. Сĕтел çинче çурта çунать. Тĕттĕм. Санюк шăппăн çивитти витĕнсе сĕтел хушшине ларать. Куçкĕски çине пăхать. Çав вăхăтра малтанах сĕтел айне пытанса ларнă Палюк вăрттăн тухса куçкĕски çине пăхать, каллех пытанать.

Санюк: Куртăм, куртăм!

Хĕрсем: Кама-а?

Санюк: Палюка, Палюка!

Улька сĕтел хушшине çивиттипе витĕнсе ларать. Каллех вăрттăн хыçалтан Çерук пăхать.

Улька: Хĕрсем, хĕрсем, эпĕ те куртăм, Çерука!

Çав вăхăтра сĕтел силленсе илет. Хĕрсем сĕтел айне пăхаççĕ. Пытанса ларнă каччăсене туртса кăлараççĕ.

Хĕрсем: ака ăçта пытанса ларнă пирĕн пулас савнисем. (Куласçĕ, шавлаççĕ).

Пурте пӳрте кĕреççĕ.

Марине: Хĕрсем тепĕр çул тырă мĕнле пулассине юмăç ярса пăхар-ха.

Хĕрсем: Пăхар-ха, пăхар-ха.
Марине тулли пучах илет те шĕкĕлчеме пуçлать.

Марине: Кĕлет тулли, михĕ тулли, пачах та пулмасть...
Çапла каласа пучаха шĕкĕлчесе пĕтерет. Кĕлет тулли тухать.

Анук: Хĕрсем, каччăсем, кĕлет тулли тырă пулать. Савăнар, ташлар, тулăх пурнăçпа пурăнар.

Пурте такмаксем каласа ташлаççĕ, савăнаççĕ.

## СĔННĔ ЛИТЕРАТУРА


И. П. Павлов. Морфологие çĕнĕ программăпа вĕрентесси. Шупашкар. 1981.

И. А. Андреев, З. П. Митта. Синтаксиса çĕнĕ программăпа вĕрентесси. Шупашкар. 1981.

Чĕлхепе литература вĕрентессин хăш-пĕр ыйтăвĕсем. I—III кĕнекесем. Шупашкар, 1980, 1982, 1984 ç.ç.

Л. П. Сергеев. Чăваш чĕлхи методикин ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1989.

Л. П. Сергеев. Грамматика ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1982.

В. Самойлов. Кану кĕнеки. Шупашкар, 1982.

Н. Васильев. Ытарлăх. Шупашкар, 1985.

З. Ф. Вахремеева, П. А. Архипов. Сочинени çырма вĕрентесси. Шупашкар, 1983.

Г. В. Лукоянов. 4 класра чăваш чĕлхи вĕрентесси. Шупашкар, 1985.

И. П. Павлов V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1985.

И. А. Андреев. Чăваш пунктуацийĕ: иртни, хальхи, пуласси. Шупашкар, 1990.

Н. Г. Иванова. Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе пултарулăхне вĕрентесси. Шупашкар, 1992.

В. Е. Цыфаркин. Пирĕн ентешсем — ӳнер ĕçченĕсем. Вăрмар, 1991.

Чăваш уявĕсемпе мешехисем. Шупашкар, 1991.

Д. С. Филиппова, Р. Н. Петрова. Чăваш литератури вĕрентессин хăш-пĕр ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1989.

ББК К 74.261.4.
Ц 97

## ТУПМАЛЛИ

Умсăмах . . . . 3
Анне — чăваш чĕлхинче чи çепĕç сăмах 5
Вĕреннине çирĕплетесси . . 10
Япала ячĕсен тĕнчи . . . 14
Экспресс-тĕрĕслев . . 16
Экспресс-тĕрĕслев . . 16
Сăмах вăййи выляр-и . . . 17
Чăваш чĕлхипе литература кабинечĕ 19
VIII класра литературăна вĕрентекенсене пĕлсе тăма . . . . 24
Тĕпчев-тишкерӳ . . . . 35
Шкулти краеведени . 40
Халăх йăли-йĕрки сцена çинче 46
Сĕннĕ литература . . 55

В. Е. ЦЫФАРКИН.

**ЧĔЛХЕПЕ ЛИТЕРАТУРА ВĔРЕНТЕССИН ХĂШ-ПĔР ЫЙТĂВĔСЕМ**

**НЕКОТОРЫЕ ВОПРОСЫ ПРЕПОДАВАНИЯ ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА И ЛИТЕРАТУРЫ**

Издательская группа «Аван-и».
428000, г. Чебоксары, а|я 263.

Подписано к печати 23.06.93. Формат 60 х 90|16.
Печать высокая. Печ. л. 3,5. Тираж 500. Заказ 808.
Цена свободная.

Урмарский филиал Цивильской типографии
Государственного комитета Чувашской Республики
по печати и информации.
429400, п. Урмары, ул. Советская, 8.

35.00